им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Ноябрь 15
ВЫРСАРНИКУН
№ 223 (9132)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ В. М. Молотов патĕнче пулнă пресс-конференци (1—2 стр.).
П. Чичикин.—Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парар (2 стр.).
Р. Архипов.—Кантăр—тупăшлă культура (2 стр.).
П. Петров.—Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне иттерсе тултартăмăр (2 стр.).
ÇĔНЕ ПИЛĔК ÇУЛЛАХРИ СТАХАНОВЕЦСЕМ.
И. Кузьмин.—Пултаруллă бригадир (2. стр.).
Н. Цветков.—Мĕншĕн колхозсенче парниксемпе теплицăсем сахал? (2 стр.).
КАПКАН СТРАНИЦИ: С. Павлов.—Куçук текех «вĕçес» çук! Калав; Е. Афанасьев, С. Шавлы. — Машинран тухмасăр, чунпала çунмасăр... Фельетон (3 стр.).
ВУЛАКАНСЕН ЫЙТАВĔСЕМ ÇИНЕ ПАНĂ ОТВЕТСЕМ. И. Артемов. — Çам вăл Маккарти, мĕн вăл маккартизм? (4 стр.).
Америка çар çыннисен суя докладне тăрă шыв çине кăлараççĕ (4 стр.).
«Европа çарне» тунине хирĕç. Францири общественноçăн протесчĕ (4 стр.).
Тегеранри лару-тăру (4 стр.).

Партин шалти демократине тĕрĕс пурнăçласа пымалла

Партин шалти демократине тĕрĕс пурнăçласа пырас ĕçе Коммунистсен партийĕ яланах пысăк вырăна хунă, мĕншĕн тесен партин шалти демократийĕ вăл — коммунистсене воспитани пама, вĕсене ертсе пырас ĕçе хутшăнтарма кирлĕ хăватлă меслет. Партин шалти демократийĕн ленинла-сталинла принципĕсем партин пурнăçĕн çирĕп законĕ пулса тăраççĕ.

Парти организаци тĕлĕшĕнчен йĕркеленсе тăрас ĕçре ертсе пыракан принцип—демократилле централизм пулса тăрать, тенĕ КПСС Уставĕнче. Вăл çакна пĕлтерет: партин ертсе пыракан органĕсене пурне те, аялтан пуçласа çӳле çитиччен, суйласа лартмалла, парти органĕсем хăйсен парторганизацийĕсем умĕнче вăхăтран вăхăта отчет тумалла, парти дисциплинине çирĕп пулмалла тата сахалтарахăшĕ ытларахăшне пăхăнса тăмалла, партин аслă органĕсем йышăннă решенисем кĕçĕнрех органсемшĕн пĕр сăмахсăрах обязательнă пулмалла.

Коммунистсен партийĕ хăйĕн кашни членне Уставра кăтартса панă обязанноçсене яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыма, парти ĕçĕшĕн ответлă пулма, çав вăхăтрах партин шалти демократийĕнчен тухса тăракан хăйĕн прависемпе те пĕтĕмĕшпех усă курма хушать.

КПСС Уставĕн 28-мĕш параграфĕнче çапла кăтартса панă:

«Парти политикин ыйтăвĕсене уйрăм организацисенче е пĕтĕм партире ирĕклĕн тата ĕçлĕн сӳтсе явасси—партин кашни членĕн прави, партин шалти демократийĕнчен тухса тăракан никам туртса илеймен прави пулса тăрать. Партин шалти демократи никĕсĕ çинче кăна самокритикăна сарма тата парти дисциплинине çирĕплетме пулать, вăл дисциплина механически мар, ăнланулла пулмалла».

Парти членĕ парти пухăвĕсенче е парти пичетĕнче парти политикин ыйтăвĕсене ирĕклĕн те ĕçлĕн сӳтсе явма, парти пухăвĕсенче партин кирек хăш работникне те критиклеме, парти органĕсене суйлама тата суйланма, хăйĕн ĕçĕ çинчен е хăйне мĕнле тыткалани çинчен решени йышăннă вăхăтра пур чухне те унта хăйне чĕнтерме требовани лартма, кирек мĕнле ыйтупа та тата заявленипе те партин кирек хăш инстанцине те, КПСС Центральнăй Комитечĕ таранах, çитме пултарать.

Республикăра халĕ партконференцисем иртеççĕ. Партин районти конференцийĕсенче коммунистсем пысăк активлăхпа парти органĕсемпе вĕсен руководителĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклеççĕ, парти организацийĕсен ĕçри пултарулăхне малалла ӳстерме тăрăшаççĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ кăтартса панă задачăсене пурнăçа кĕртме конкретлă ĕçсем палăртаççĕ.

Парти органĕсен отчечĕпе суйлавĕсем çакна кăтартса параççĕ: КПСС XIX-мĕш съезчĕ хыççăн партин шалти демократине тата критикăпа самокритикăна вăйлатас тĕлĕшпе туса иртернĕ ĕçсем парти организацийĕсене партилле-политикăлла ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме чылай пулăшрĕç. Партин пуçламăш организацийĕсенчи пухусенче, парти конференцийĕсенче коммунистсем çитменлĕхсене хăюллăн палăртаççĕ, партин шалти демократийĕпе парти дисциплини çине уйрăм работниксем улпутла пăхма хăтланнине татăклăнах сивлеççĕ. Хăйсен шанчăкне тивĕçлĕ пулман çынсене коммунистсем парти органĕсене суйламаççĕ.

Парти организацийĕсемпе вĕсен руководителĕсем партин шалти демократине яланах тĕрĕс пурнăçласа пыма, кашни коммуниста хăйĕн обязанноçĕсене пурнăçлама тата хăйĕн прависемпе усă курма кирлĕ условисем туса пама тивĕç. Анчах хăшпĕр руководительсем çакăн çинчен манса каяççĕ, партин шалти демократине пăсас çул çине тăраççĕ, массăсем калаччине шута илмеççĕ.

Партин хăшпĕр райкомĕсем коммунистсен прависене шута хуманни çинчен калакан фактсене курмасăр иртсе каяççĕ. Сăмахран, КПСС Шăмăршă райкомĕ Шăмăршăри вăтам шкулти пуçламăш парторганизаци кăçал март уйăхĕнче йышăннă тĕрĕс мар решение—партин шалти демократине тата аялтан килекен критикăна вăйлатма чарса тăракан решение вăхăтра асăрхаса, вăхăтра тӳрлетмен.

Пирĕн партири демократизм вăл—ĕçре демократизм. Парти хăйĕн членĕсен пуçарулăхĕпе ĕçри пултарулăхне анлăн сарса яма тăрăшать. Коммунистсем политикăпа производство пурнăçĕнче мĕн чухлĕ активлăрах пулаççĕ, организаци çавăн чухлĕ лайăхрах ĕçлет, хуçалăхпа политикăлла задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре унăн пултарулăхĕ çавăн чухлĕ пысăкрах пулать.

Партин шалти демократине вăйлатас, парти организацийĕсен пĕтĕм ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе парти пухăвĕсем пысăк вырăнта тăраççĕ. Анчах чылай çĕрте парти пухăвĕсене вăхăтра иттермеççĕ тата пухăва начар хатĕрленеççĕ, хăйсен организаци ĕçне коммунистсене çителĕклĕ хутшăнтармаççĕ. Хĕрлĕ Чутай, Куславкка районĕсенчи чылай пуçламăш парторганизацисенче çавăн пек пысăк çитменлĕхсем пур.

Парти пухăвĕ—пуçламăш парторганизацин ертсе пыракан аслă органĕ. Пухусенче çĕршывăн политикăлла тата экономикăлла пурнăçĕнчи чи паха ыйтусене, хăйсен организацийĕн ĕçĕсемпе задачисене сӳтсе явса, коммунистсем идея тĕлĕшпе ӳссе çирĕпленеççĕ, дисциплинăллă, организациллĕ пулма тата партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн ответлă пулма воспитани илеççĕ. КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен парти пухăвĕсене вăхăтра иртерме, ыйтусене сӳтсе явас тата йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес ĕçе коммунистсене анлăн хутшăнтарма тăрăшмалла.

Устав тăрăх пуçламăш парторганизацин бюровне пĕр çуллăха суйлаççĕ. Парти органĕсен парти организацийĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем вăхăтра пулса иртнине, парти руководителĕсем тунă ĕçсем çинчен коммунистсем умĕнче тăтăшах отчет тунине, парти организацийĕсен секретарĕсем черетлĕ пухура малтан йышăннă решенисене пурнăçа кĕртни çинчен каласа панине яланах тĕрĕслесе тăмалла.

Парти бюровĕсен—коллективлăн ертсе пымалли органсен ĕçне лайăхлатмалла. Хăшпĕр парторганизацисенче пĕтĕм организациллĕ ĕçе секретарь пĕччен туса пырать, бюро членĕсем ларусенче кăна пулаççĕ. Бюро ларăвĕсене те сайра хутра кăна иттереççĕ. Çакăн пек йĕркене татăклăнах пĕтермелле.

Коллективлăн ертсе пыни пирĕн партин ертсе пырас ĕçри аслă принципĕ пулса тăрать. Парти ĕçĕн практикинче пĕччен йышăннă решенисем çителĕксĕр, часчасах йăнăш решенисем пулаççĕ. Коллективлă опыт, коллективлăн ертсе пыни кăна парти пурнăçĕн ыйтăвĕсене тĕрĕс татса пама, парти организацийĕн пĕтĕм ĕçне лайăхлатма, çапла вара республикăн пĕтĕм хуçалăх пурнăçĕпе культура строительствинче парти организацийĕсен рольне ӳстерме май парать.

Парти райкомĕсен, хула комитечĕсен пленумĕсен рольне ӳстерме, вĕсене палăртнă срокра иттерме тăрăшман, пленумсем иттерме начар хатĕрленекен руководительсем ĕçе пысăк сиен кӳреççĕ. Пленумсем иттерес тĕлĕшпе КПСС Вăрнар райкомĕн пысăк çитменлĕхсем пур, юлашки виçĕ уйăх хушшинче кунта райком пленумĕ пĕр хут кăна пулнă.

Партин XIX-мĕш съезчĕ партин шалти демократине куллен пурнăçа кĕртсе пыма, самокритикăпа аялтан килекен критикăна анлăн сарса яма, коммунистсен политикăлла активлăхне ӳстерме хушса хăварчĕ. Работниксен парти массисем умĕнчи ответлăхне ӳстермелле, парти массисене хăйсен руководителĕсене тĕрĕслесе тăма май памалла. Коммунистсем пухусенче, пленумсенче, конференцисенче, çырусенче, хаçат страницисенче кăтартса панă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе пырса, коммунистсен паха сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртмелле. Парти массисен активлăхне, ĕçри пултарулăхне ӳстерме, критикăна вăйлатма условисем туса памалла.

Парти организацийĕсен хăйсен ĕçĕнче демократи йĕркине яланах çирĕп тытса пымалла, суйлавсем вырăнне кооптаци туни пулмалла мар. Демократиллĕ централизм принципĕсене çирĕп пăхăнса ĕçлесе, парти политикине, КПСС XIX-мĕш съезчĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă историллĕ решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе партин организацийĕсен кĕрешӳри пултарулăхне ӳстерер.

„Агитатор блокночĕн" черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 21-мĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Унта З. Белова çырнă «Апат-çимĕç таварĕсем нумайрах тата лайăхрах туса кăларар»; И. Шорников çырнă «МТС-сем—колхоз стройĕн индустриллĕ никĕсĕ» тата П. Трофимов çырнă «Артиллери кунĕ» ятлă статьясем пичетленнĕ.

«Агитаци ĕçĕн опытĕнчен» ятлă пайра Кувакино районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри Л. Елизаров агитатор вылăх-чĕрлĕх фермине ĕçлекенсем хушшинче агитаци ĕçне мĕнле туса пыни çинчен каласа пани пичетленнĕ.

«Блокнотра» агитаторсем валли капитализмла çĕршывсенче забастовкăсен юхăмĕ ӳссе пынине кăтартса паракан цифрăсемпе фактсем пур.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов патĕнче пулнă пресс-конференци

Кăçалхи ноябрĕн 13-мĕшĕнче В. М. Молотов юлташ патĕнче пресс-конференци пулса иртнĕ, унта совет пичечĕн представителĕсем, çавăн пекех ют çĕршывсен Мускаври корреспонденчĕсем пулнă.

Пресс-конференци пуçламăшĕнче В. М. Молотов юлташ çакăн пек пĕлтернĕ:

«Ноябрĕн 3-мĕшĕнче Совет Правительстви Англи, США тата Франци Правительствисене Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен нота ярса пачĕ.

Çав нотăра Совет Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухма, унта çак ĕçсене тума сĕнчĕ: пĕрремĕшĕ, США-н, Англин, Францин, Совет Союзĕн тата Китай Халăх Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пăхса тухмалла, иккĕмĕшĕ, США-н, Англин, Францин тата Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче Германи ыйтăвне тата ку ыйтупа çыхăннă, Европăра хăрушсăрлăх тăвас тĕлĕшпе тăракан ыйтусене сӳтсе явмалла.

Совет Правительствин çак ноти пирки ют çĕршывсенче официальнăй ушкăнсенчи çынсем те, тĕрлĕ шухăшлă пичет органĕсем те нумай çырчĕç, мĕншĕн тесен нотăра лартнă ыйтусене татса пани мире тата тĕнчери хăрушсăрлăха тĕреклетес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнă пулĕччĕ.

Нумай çĕршывсенчи общественноçăн анлă ушкăнĕсем Совет Правительствин сĕнĕвĕсене кăмăлласа йышăнчĕç.

США-па Англире, çавăн пекех Францире правительствăри çынсем тата пичетĕн хăшпĕр органĕсем çав сĕнӳсене вара пачах урăхла кĕтсе илнĕ. США президенчĕ Эйзенхауэр совет нотине «негативнăй» нота тесе те каланă, унăн сăмахĕсем тăрăх, «совет нотинче пĕрле пухăнас шухăш нимĕн чухлĕ те палăрмасть» пулать. Çавăн пек калани уççăнах чăнлăха хирĕç пырать.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухас ыйту халĕ тĕнчери общественноçа хытă интереслентерет. Совет Союзĕ «пĕрле пухăнма» нимĕн чухлĕ те шухăшламасть тесе калаçнисем фактсемпе паллашнă çынсене ултала пултараймаççĕ. Ĕç пачах урăхла пулнине ăнланса илме йывăр мар. Çакăн çинчен аса илтерсен те çителĕклĕ: Совет Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен юлашки вăхăтра та виçĕ хутчен—августăн 4-мĕшĕнче, сентябрĕн 28-мĕшĕнче, ноябрĕн 3-мĕшĕнче США, Англи тата Франци Правительствисем умне ыйту лартрĕ.

Анчах та ĕç Совет Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасшăн, США, Англи тата Франци Правительствисем вара çавăн пек канашлăва пухасшăн мар пулнинче мар. Çакна йышăнмасăр тăма çук: çав правительствăсем пурте Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухассишĕн пулни çинчен пĕлтернĕ. Апла пулин те вĕсем çавăн пек канашлăвăн тĕллевĕсем çинчен ку таранччен калаçса татăлма пултараймарĕç.

Çак ыйту тĕлĕшпе Совет Союзĕ мĕнле позици йышăннине илес пулсан, ун çинчен ноябрĕн 3-мĕшĕнчи нотăра тĕплĕн каласа панă. Пирĕн позици çакăн пек: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухни тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатас тĕллев тытать пулсан, çавнашкал канашлăва пухни кирлĕ тата усăллă. США, Англи тата Франци Правительствисен хăшпĕр заявленийĕсем тăрăх шутласан, вĕсем те тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма кирли çинчен калаçаççĕ. Анчах та, паллă ĕнтĕ, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатма кирли çинчен калаçни—пĕр ĕç, çав тĕллевпе реальнăй утăмсем тăвасси вара—урăх ĕç пулать.

Эпир çапла шутлатпăр: канашлăва мире тата тĕнчери хăрушсăрлăха çирĕплетес ĕçре малалла утăм тăвас шутпа иртермелле. Тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пăхса тухни, çавăн пекех Германи çинчен тăракан ыйтăва, вăл шутра Германие наци тĕлĕшĕнчен пĕрлештерес тата мирлĕ договор тăвас ыйтăва, сӳтсе явни çав тĕллевсене пурнăçлама пулăшмалла. Мĕншĕн тесен Германи ыйтăвне татса пани Европăра хăрушсăрлăх туса хурас, çапла вара, тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас ыйтупа питех те тачă çыхăнса тăрать.

США, Англи тата Франци Правительствисем урăхла позици йышăннă. Вĕсем тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явма килĕшмеççĕ. Германи ыйтăвне сӳтсе явассине мире юратакан, демократиллĕ пĕрлĕхлĕ Германи тăвас задачăна мар, ăна тепĕр хут хĕçпăшаллантарассине вăйлатас задачăна пăхăнтарасшăн.

Хăвăрах шутласа пăхăр-ха: çак çулпа пырсан, мире тата тĕнчери хăрушсăрлăха тĕреклетес ĕçре малалла утăм тума пулăшма пулать-и? Эпир, совет çыннисем, çак ыйту çине хамăрăн ответа паратпăр: çакна мире тĕреклетес ĕçре малалла утăм туни тесе хаклама çук, ку вăл тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатма пулăшмасть.

Апла пулсан, Луганăра тăватă державă Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен мĕншĕн сĕнӳ панă-ха? Çак сĕнĕве тĕнчери халăхи вăхăтра татса памалли ыйтусене татса парас тата тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма чăннипех тăрăшас тĕллевпе паман пулмалла. Паллах, Луганăра конференци пухма сĕнекен нотăна пичетлесе кăларнă хыççăн çийĕнчех США государство департаменчĕн представителĕ «Луганăра конференци пухăнас-мĕн пулсан мĕнле те пулин татăклă килĕшӳ тума пултарас пирки питех те иккĕленмелле», тесе калани ăнсăртран пулман.

Çак кунсенче Голланди парламенчĕн депутачĕ Герретсон профессор çырнă статьяна пичетлесе кăларнă. Вăл США, Англи тата Франци тытса пыракан позици çинчен çапла калать: вĕсем тăватă державă конференцийĕ çинчен пыракан мĕнпур калаçусене конференци пухас мар шутпа туса пыраççĕ, тет. «Çапла калача та сăлтавсем çителĕклех пур,—тесе калать вăл,—конференци пухас марри вĕсен чăн-чăн тĕллевĕ пулнă та ĕнтĕ».

Паллах, тăватă державă канашлăвне пухасси çинчен калаçусем иртерме пулать, мĕншĕн тесен çакăн пек тума тĕнчери анлă ушкăнсем тăрăшнине шута илмесĕр тăма çук, ĕçсене вара çак калаçусем ăнăçсăр вĕçленмелле пулччăр тесе туса пыма пулать. Совет Союзĕ ку ĕç çине пачах урăхла пăхать. Уншăн канашлу çинчен тăракан ыйту спекуляци ыйтăвĕ пулмасть. Эпир тĕнчери татса пама вăхăт çитнĕ ыйтусене татса парассипе çыхăннă канашлупа интересленесси тĕнчери хутшăнусенчи йывăрлăха чакарма тăрăшниччен, мире тата халăхсем хушшинчи хăрушсăрлăха çирĕплетме тăрăшниччен тухса тăрать.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Совет Союзĕ США, Англи, Франци, СССР тата Китай Халăх Республики хутшăннипе тĕнчери хутшăнусене çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухма сĕннĕ тата сĕнет те. Çакна никам та хирĕçлеме пултараймасть: тĕнчери халăхи вăхăтра татса памалли ыйтусене татса парас ĕçе Китай Халăх Республики хутшăнни пысăк вырăн йышăнса тăрать, çавăн пекех Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата Китай Халăх Республики хушшинчи çыхăнусем çинчен тăракан ыйтусем патне пырса тухмасăр тĕнчери халăхи вăхăтра татса памалли ыйтусене татса парасси çинчен тивĕçлипе калаçма çук. Корея ыйтăвне, вăл шутра Корейăран ют çĕршывсен çарĕсене илсе тухасси çинчен тăракан ыйтăва пĕтĕмпех татса парас тата Корея государствине пĕрлештерес ыйтăва татса парас тĕлĕшпе те ытти государствăсем Азири аслă Китай Халăх Республики пек государствăн законлă интересĕсене шута хуни питех те кирлĕ. Пилĕк аслă державă канашлăвне Китай хутшăннипе иттересси çинчен калаçса татăлнă факт хăех тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатас, мире тĕреклетес тĕлĕшпе шанчăклă утăм тунине пĕлтернĕ пулĕччĕ.

Нумаях пулмасть Иден общинăсен палатинче тухса каланă чухне: Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕ хушшинчи йывăр лару-тăрăва çăмăллатасси Совет Правительствинчен кăна килет, тесе каланă. Ку вăл, паллах, ĕненмелле сăмах мар. Халăхи вăхăтра Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенчен уйрăлса кайнăшăн пуринчен ытла «Хĕвеланăçĕ» ответлă мар-и вара. Тепĕр енчен, çакă курăнсах тăрать: пилĕк державă канашлăвне Китай хутшăнни Хĕвеланăçĕпе Хĕвелтухăçĕ хушшинчи хирĕçӳсене чакарас тĕлĕшпе тунă питех те кирлĕ утăм пулнă пулĕччĕ.

Пур ĕçсем те çакăн çинчен калаççĕ: халăхи вăхăтра тĕнчери ыйтусене татса пама чăнласах тăрăшни пулас пулсан, çакна тумалли май тĕнчери хутшăнусенчи йывăрлăха чакарасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухасси пулать. Анчах та халăхи ĕçсене çакăн пек кăтартма пăхни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ: тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухма сĕнни пĕрре те Хĕвеланăçĕнчи тата Хĕвелтухăçĕнчи халăхи вăхăтра çивĕччĕн тăракан мĕнпур ыйтусене халех пĕтĕмпех татса пама тăрăшнине пĕлтермест. Ыйтăва çакăн пек çиелтен ăнлантарнипе, çак сĕнĕве пăхса кăтартма пăхнипе никам та килĕшмĕ. Анчах та канашлу аллисене малтанах тăлланатарса хуни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен тĕнчери хутшăнусене халăхи вăхăтра мĕнле ыйтусене пăхса тухни çăмăллатма пултарасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухассине канашлăвăн хăйĕн татса памалла.

Ку тĕлĕшрен те Совет Союзĕн позицийĕ пĕтĕмпех паллă.

Тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха çăмăллатас енĕпе тумалли ĕçсем çинчен пăхса тухма сĕннине эпир ырлатпăр, мĕншĕн тесен эпир мире тата тĕнчери хăрушсăрлăха тĕреклетме тăрăшатпăр. Çавăнпа та эпир пилĕк державă канашлăвĕ васкаса хĕçпăшалланассине чарса лартма, хĕçпăшалсене, чи малтан, пилĕк аслă державă хĕçпăшалĕсене чылай чакарассине пурнăçлама кирлине шута илессине пĕрремĕш вырăнта тăракан ĕç тесе шутлатпăр. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕ тăрăх, мирлĕ пурнăç тата тĕнчере хăрушсăрлăх тăвассишĕн тĕп ответлăха пилĕк аслă державă çине хунă. Хĕçпăшалсене чакарас задача атомлă, водородлă хĕçпăшалпа, халăха йышлăн пĕтерекен ытти хĕçпăшалсемпе усă курма чарас задачăпа тачă çыхăнса тăрать. Хĕçпăшалсене чакарасси, васкаса хĕçпăшалланнине чарасси пĕтĕм тĕнчери халăхсемшĕн чи пысăк тата халех татса памалли ыйту пулса тăрать.

Çакна май пĕр ĕç çинчен каламасăр иртме çук. Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсен государство деятелĕсен сăмахĕсенче те, урăх çĕршывсенче тухса тăракан нумай хаçатсенче пичетленекен статьясенче те ССР Союзĕ канашлура тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха çăмăллатас пирки тăракан ыйтăва пăхса тухма сĕнни çинчен нимĕн те шарламаççĕ. Çакăнта тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха çаплах хăварма, тен, çав йывăрлăха вăйлатма, çав йывăрлăха чакарассине чăрмантарма тăрăшакан çынсен ушкăнĕсем хĕсни курăнать. Çапах та агрессиллĕ ушкăнсем çавăн пек хирĕç тăни мире тĕреклетессишĕн тăракан çынсем вăй хурса кĕрешессине вăйсăрлатма пултарайманнине тата вĕсене тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха çăмăллатассишĕн тата хытăрах çине тăрса кĕрешме çĕклессине эпир шанса тăратпăр.

Совет Союзĕ ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă нотăра США, Англи, Франци тата ССР Союзĕн Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем хутшăннипе Германи ыйтăвне те сӳтсе явма сĕннĕ. Çак ыйтăва татса пани Европăра хăрушсăрлăх туса хурас, мире тĕреклетес ĕçре питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине никам та йышăнмасăр тăма пултараймасть. Çавăнпа ĕнтĕ Совет Союзĕ Германи ыйтăвне сӳтсе явнă чухне Германи наци тĕлĕшĕнчен пĕрлĕхлĕ пуласси çинчен, Германин демократиллĕ тата мире юратакан правительствипе мирлĕ договор тăвасси çинчен тăракан ыйтăва та сӳтсе явасшăн. Çапла туни Европăри мире юратакан государствăсен интересĕсемпе килĕшсе тăрăччĕ тата, паллах ĕнтĕ, Германи халăхĕн интересĕсемпе те килĕшсе тăнă пулĕччĕ.

США, Англи тата Франци Правительствисем урăхла позици тытса пыраççĕ. Вĕсем Германие çĕнĕрен пĕрлĕхлĕ çĕршыв туса хурас тĕлĕшпе мĕнле те пулин практикăлла ĕçсем тума тата мирлĕ договор тăвас ыйтăва пăхса тухма килĕшмеççĕ. Германипе тумалли мирлĕ договорăн никĕсĕсене Совет Правительстви сĕннĕренпе часах икĕ çул тултарать. Çапах та виçĕ державă Правительствисем ку сĕнӳсем çинчен хăйсен шухăшĕсене халиччен те пĕлтермерĕç тата хăйсен мирлĕ договор проектне тăратмарĕç. Вĕсем Парижри тата Бонри килĕшӳсене тунипе Хĕвеланăç Германие хăвăртрах Çурçĕр Атлантика тăрăхĕнчи державăсен агрессиллĕ ушкăнне, Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕçле ушкăна, кĕртме тăрăшниччен çакă курăнать: вĕсен политикин çул-йĕрĕ Европăра хăрушсăрлăх туса хурассипе кăна мар, Германин наци пĕрлĕхне çĕнĕрен туса хурас интерессемпе те нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмасть.

Çак агрессиллĕ çул-йĕре малалла та пурнăçласа пырсан, Хĕвеланăç Германие мире юратакан государство тесе никам та шутлама пултараймасть, мĕншĕн тесен вăл империализмла державăсен паллă ушкăнĕн орудийĕ пулса тăрать. Ĕçсем çавăн пек пулнă чухне Çурçĕр Атлантика блокĕнчи агрессиллĕ ушкăнсем Хĕвеланăç Германири агрессиллĕ ушкăнсемпе, тен, вăхăтлăха хăшпĕр енчен калаçса татăлма пултарĕç, анчах результачĕ пĕрре пулать: Хĕвеланăç Германи çĕнĕрен милитаризациленет, татăклăнах ĕнерхи гитлеровецсемпе ытти реваншистсен аллинче пулать, хăйĕн милитаристла чĕлхипе калаçма пуçлать, çĕнĕ агрессин хăрушă вучахĕ пулса тăрать. Эпир Европăра хăрушсăрлăх туса хурассишĕн чăннипех тăрăшатпăр пулсан, çавна шута илмесĕр тăма çук. Çакă уççăнах паллă: Германи милитаризмне çĕнĕрен çĕклес политика тата Хĕвеланăç Германие Çурçĕр Атлантика блокĕн агрессиллĕ ушкăнне кĕртме тăрăшни Франци, Польша, Бельги, Чехословаки, Дани, Голланди тата Европăри ытти çĕршывсен халăхĕсемшĕн тӳрех хăрушлăх туса хурать, çав халăхсене малашнехи ырă пурнăç пуласси не ĕненсе тăрас шанчăксăр хăварать,—ĕçсем çапла тăнă чухне Европăра хăрушсăрлăх пуласси не шанма çук.

США, Англи тата Франци Правительствисем октябрĕн 18-мĕшĕнче панă нотăра Германи ыйтăвне Европăра хăрушсăрлăх туса харас ыйтупа тивĕçлипе çыхăнтарнă. Анчах халăхи вăхăтра Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен милитаризацилени унăн кӳршисемшĕн хăрушсăрлăх тăвассипе кăна мар, Европăри ытти çĕршывсемшĕн хăрушсăрлăх туса хурассипе те килĕшсе тăмасть. Америка Европăра тата ССР Союзĕн чиккисене çывăх ытти районсенче çар базисем нумайрах та нумайрах туни Европăра хăрушсăрлăх тăвассипе килĕшсе тăмасть.

Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсенчи пичет çивĕч ыйту—Америкăн Европăри, Азири тата Африкăри çар базисем пирки тăракан ыйту çинчен юриех нимĕн те çырмасть. Америка сывлăш-çар тата тинĕс-çар базисем нумай туса, вĕсемпе Совет Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене, Китай Халăх Республикине хупăрласа илме тăрăшни Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсене хӳтĕлени пулать тесе ĕнентерсе калама хăякан хăюллă журналистсем тупăнман пек туйăнать. Çавăн пек ĕнентерсе калама çук тата ун пек калани не никам та ĕненмĕ.

Апла пулсан, эпир чăннипех те Европăри мĕнпур çĕршывсемшĕн хăрушсăрлăх туса хума тăрăшатпăр тата эпир тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатма тăрăшатпăр пулсан, СССР, ку ыйтăва—ют çĕршывсен территорийĕсенчи Америкăн çар базисем çинчен тăракан ыйтăва—сӳтсе явма требовани лартни вырăнлă пулнине мĕнле хирĕçлĕн-ха.

США государство секретарĕ Даллес, паллах, Америкăн Европăри, Азири тата Африкăри çар базисем «коллективлă хăрушсăрлăха вăй парса тăраççĕ» тесе калама пултарать. Кунта «коллективлă хăрушсăрлăх» тени Европăри мĕнпур çĕршывсен хăрушсăрлăхне пĕлтерменни курăнать. Мĕншĕн тесен Америка Европăри пĕр çĕршывсенче çар базисем туни Европăри ытти çĕршывсене хирĕç, çав базăсене туман çĕршывсене хирĕç, «вăйпа» хăратса тăни пулни уççăнах курăнать. Анчах та ку вăл çакна пĕлтерет: Америка нотинче Европăри хăрушсăрлăх çинчен калани пĕлтерĕшне вырăна хума Даллес шутламасть те. Вăл «вăйпа хăратмалли политикăна», тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенче усă курма юратакан меслете тата тепĕр хут мухтама çеç тăрăшать. Кирек мĕнле пулсан та çакăн çинчен манма юрамасть: ку меслет Совет Союзĕ тĕлĕшĕпе пачах юрăхсăр пулни курăнчĕ, çав меслет çине шанса мĕнле те пулин плансем тăвакансен лайăх пуласси не кĕтмелли те çук.

Германи ыйтăвĕ тĕлĕшпе виçĕ державăн позицийĕ уççăнах çыхăнманни палăрчĕ, мĕншĕн тесен ку ыйтăва Европăра хăрушсăрлăх тăвас ыйтупа çыхăнтармасăр тăма çук. Çавăнпа та Совет Правительствин тивĕçлĕ ăнлантарусем пама ыйтмалла пулчĕ. Совет Правительствин нотинче кун пирки çапла каланă:

«Совет Правительстви Англи правительствинчен, çавăн пекех США-па Франци правительствисенчен акă мĕн пирки ăнлантарса пама ыйтасшăн: вĕсем Германи ыйтăвне тăватă державă министрĕсен канашлăвĕнче сӳтсе явма хатĕр пулни çинчен тунă заявлени тата вĕсем Европăра хăрушсăрлăх туса хунин пысăк пĕлтерĕшне йышăнни çакăн пек лару-тăру патне—пĕр енчен, канашлура Германи ыйтăвне пăхса тухма сĕнес, тепĕр енчен, çав вăхăтрах, Парижра тата Бонра тунă килĕшӳсене халиччен çирĕплетмен государствăсене çирĕплеттерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнас лару-тăру патне—илсе пырас çук-и? Çаксем пирки ăнлантарса пани кирлĕ, мĕншĕн тесен çӳлте асăннă килĕшӳсене çирĕплетни тата вĕсем вăя кĕни Германие çĕнĕрен пĕр государство туса хума май памасть, çавăн пирки Германи ыйтăвне тăватă державăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче сӳтсе явни усăсăр пулма пултарать. Мĕншĕн тесен çавăн пек канашлу ĕçне виçĕ державă тата Бонри Аденауэр правительстви Хĕвеланăç Германие Çурçĕр Атлантика блокне кĕртес тĕлĕшпе тата Хĕвеланăç Германин реваншистла çарне тăвас тĕлĕшпе хăйсем малтанах йышăнса килĕштернĕ обязательствăсем чăрмантарса тăма пултараççĕ».

Совет Союзĕнче çак ыйту пирки ăнлантарса парасса кĕтеççĕ.

Çаксене пурне те каланă хыççăн ирĕксĕрех ыйту тухса тăрать: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕ пулать-и? Ку ыйту çине ответ парасси, чи малтанах, США, Англи тата Франци позицийĕнчен килет. Вĕсем тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва, çавăн пекех Германи ыйтăвне тата унпа çыхăннă, Европăра хăрушсăрлăх тăвас ыйтусене пăхса тухма килĕшĕç-и? Çапла ĕнтĕ, ответ парасси çавăнтан килет.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов патĕнче пулнă пресс-конференци

(Юлашки).

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕ ку вăхăтра кирлĕ пулни пĕчĕкленмен-ха. Анчах та, малтанах канашлура мĕнле те пулин ыйтăва кăна пăхса тухмалла, çавăн пек канашлăвăн тĕп ыйту çине — тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатасси çинчен тăракан ыйту çине—пăхмалла мар, тесе шутлама юрамасть. Çак çул çинчи кирек мĕнле ăнăçлăха та, вăл Хĕвеланăç е Хĕвелтухăç тĕлĕшпе-и, мире юратакан çĕршывсен çитĕнĕвĕ тесе шутламалла.

Виçĕ державăн Бермутри канашлăвне хăйне майлă тĕллевсемпе тата сепаратлăй майпа пухнă пирки çав канашлу тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха ниепле майпа та çăмăллатма пултараймасть пулин те, çав канашлу çинчен ют çĕршывсенчи хаçатсем халĕ сахал мар çыраççĕ. Çавнашкал канашлусем, пĕр государствăсене тепĕр государствăсене хирĕç тăратас тĕллев лартакан канашлусем, пачах урăхла результатсем патне илсе пыма тата пĕтĕм тĕнчери хутшăнусенчи йывăрлăха ӳстерме те пултараççĕ.

Анчах ку канашлу та пĕр енĕпе паллă пулса тăрать. Государствăсен пĕчĕк ушкăнĕн çак канашлăвĕ те пĕр-пĕр ыйтăва сӳтсе явнине ирттерсе яраймасть, ку вăл тепĕр хут çавна кăтартса парать: хальхи вăхăтри тĕп ыйтăва—пĕтĕм тĕнчери хутшăнусенчи йывăрлăха çăмăллатас пирки, мире тата тĕнчери хăрушсăрлăха тĕреклетес пирки тăракан ыйтăва сӳтсе явассинчен пăрăнма май çук. Совет Союзĕ пĕр тăхтаса тăмасăр сӳтсе явассишĕн тăракан çак ыйту çине хальхи вăхăтра миллионшар та миллионшар çынсем тимлĕн пăхаççĕ».

Çапла пĕлтернĕ хыççăн **В. М. МОЛОТОВ** совет хаçачĕсен тата ют çĕршывсенчи хаçатсен корреспонденчĕсем панă ыйтусем çине ответленĕ.

С. УИЛАНД (Англири Рейтер агентстви) тата **Р. КАШИШКЕ** (Америкăри Ассошиэйтед пресс агентстви) ыйтусем парса, тăватă çĕршыв—СССР, США, Англи тата Франци—пуçлăхĕсем тĕл пулассиçине Совет Союзĕ мĕнле пăхнине пĕлесшĕн пулнă.

Малалла çакăн пек ыйту лартнă: правительствăсен пуçлăхĕсен канашлăвĕ пулас умĕн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ пулмалла-и?

В. М. МОЛОТОВ юлташ хăйĕн ответĕнче çапла каланă: ĕç канашлу çинчен калаçусем ирттерессинче мар. Канашлу тĕллевĕсене палăртса хуни пате кирлĕ.

Маларах асăннă икĕ канашлу пирки тăракан ыйту çине те çав енчен пăхмалла, мĕншĕн тесен ку вăл организациллĕ ыйту мар, политикăлла ыйту пулса тăрать.

В. КУДРЯВЦЕВ («Известия») çакăн пек ыйту панă: Корея ыйтăвĕ тĕлĕшпе политикăлла конференци пухасси çине Эсир мĕнле пăхатăр?

В. М. МОЛОТОВ çапла ответленĕ: Корея ыйтăвĕ тĕлĕшпе политикăлла конференци вăхăтра пухассишĕн Корейăпа Китай мĕн май киллине цĕтĕмпех тăваççĕ, тесе шутлатпăр эпир. Анчах, паллах ĕнтĕ, конференци пухасси пĕр енĕ пухас тениччен кăна килмест.

К. БРОДНЕЙ (Америкăри Юнайтед пресс агентстви) çапла ыйтнă: тĕнчери кирек мĕнле ыйтăва та сӳтсе явма кирлĕ тесе йышăнас пулсан, канашлура, Германипе Корея ыйтăвĕсĕр пуçне, тата мĕнле ыйтусем лартма пулнă пулĕччĕ?

В. М. МОЛОТОВ çапла ответленĕ: эпĕ калаллинчен çав канашлура пĕр-пĕр ыйтусене кăна сӳтсе явнипех чарăнмалла марри тухса тăрать. Канашлу участникĕсенчен кашниех çав канашлура тĕнчери тавлашуллă кирек хăш ыйтăва та лартма пултарать. Канашлу вăл е ку ыйтăва татса пани пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма пулăшать тесе йышăнас пулсан, вăл çавна тума пултарать. Васкасах хĕçпăшалланнине чарса лартас, хĕçпăшалсене татăклăн чакарас, атомлă, водородлă бомбăсене, çынсене йышлăн пĕтермелли тата ытти хĕçпăшалсене чарса лартас ыйтусене сӳтсе явассине Совет правительстви уйрăмах пысăк вырăна хурать. Анчах вĕсене пăхса тухни тĕнчери хутшăнусенчи йывăрлăха чакарма пултаракан ытти ыйтусене лартни те пулма пултарать.

Ю. ЖУКОВ («Правда») çакăн пек ыйту панă: Совет правительстви тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха çăмăллатмалли ĕçсене пăхса тухма сĕннĕ май хăшпĕр чухне Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсенче ку вăл тĕнчери йывăр ыйтусене пурне те пĕр вăхăтрах сӳтсе явма сĕнни вырăнне ăнланма пулать, тесе калаççĕ. Çакă вăл тĕрĕс-и? Эсир кун çинчен тĕплĕрех чарăнса тăрсан лайăхчĕ.

В. М. МОЛОТОВ çапла ответленĕ: Ку вăл, паллах, тĕрĕс мар. Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха çăмăллатмалли ĕçсене пăхса тухма Совет Правительстви панă сĕнӳ тавлашуллă пур ыйтусене те пĕр вăхăтрах сӳтсе явмаллине пачах пĕлтермест.

Ку сĕнӳ акă мĕне пĕлтерет: пĕрремĕшĕ, канашлăва аслă державăсен пурин те хутшăнмалла, вĕсенчен пĕри те канашлăва хутшăнмасăр юлмалла мар, иккĕмĕшĕ, канашлу участникĕсем тĕнчери тавлашуллă пĕр-пĕр ыйтăва сӳтсе явнипех чарăнса тăма малтанах обязательство илни пулмалла мар, вĕсем татса паман кирек хăш ыйтăва та, çакă вăл тĕнчери хутшăнусенчи йывăрлăха çăмăллатма пулăшать тесе йышăнас пулсан, çав ыйтăва сӳтсе явасси çинчен калаçса килĕшме пултараççĕ. Канашлу çине çакăн пек пăхни тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха çăмăллатма ытларах пулăшнă пулĕччĕ тата тĕнчери вăл е ку ыйтăва сӳтсе явма тăратас енĕпе канашлăва хутшăнакан пĕр çĕршыва та малтанах пӳлсе тăни пулман пулĕччĕ.

Ĕççыннисем В. И. Ленинпа И. В. Сталин Мавзолейне кĕрсе курасси çинчен

1953 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа ĕççыннисене В. И. Ленинпа И. В. Сталин Мавзолейне курма кĕртме пуçлаççĕ.

Мавзолее ытларикун 12 сехетрен пуçласа 15 сехетчен, юнкун, кĕçнерникун тата шăматкун—17 сехетрен пуçласа 20 сехетчен, вырсарникун—12 сехетрен пуçласа 17 сехетчен уçаççĕ.

Ĕççыннисем Мавзолее пырса курма вăхăтлăха çакăн пек йĕрке тунă: Мускав хулинчи ĕççыннисем Мавзолее организациленсе, ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсен исполкомĕсем урлă, Мавзолее хăш кун пымаллине кăтартнă билетсемпе пырса кураççĕ. Мускав хулине ытти хуласемпе облаçсенчен служба енĕпе командировкăна пынă, çавăн пекех отпуска тата экскурсие пынă çынсем Мавзолее тивĕçлĕ министерствăсем, ведомствăсем тата обществăлла организацисем урлă организациленсе пырса кураççĕ.

Мĕншĕн колхозсенче парниксемпе теплицăсем сахал?

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ колхозсемпе совхозсенче çĕрулми, пахча çимĕç ытларах туса илес задача кăларса тăратрĕ. Çак задачăна пурнăçлама Етĕрне районĕнчи колхозсен питĕ лайăх майсем пур. Кашни колхозăнах пахча çимĕç культурисем лартса ӳстерме юханшывсемпе кӳлĕсен хĕррисене вырнаçнă лайăх тăпраллă çĕр лаптăкĕсем нумай.

Çĕр лаптăкне пысăклатнипе пĕрлех пахча çимĕç тухăçлăхне ӳстермелле. Колхозсен çав çимĕçсене ирттерех туса илне тăрăшмалла. Парниксемпе теплицăсене лайăх йĕркелемесĕр çак ответлă задачăсене ниепле те татса пама çук. Районти чылай колхозсемпе ялхуçалăх органĕсен руководителĕсем çакна ăнланса илмен-ха. Халлĕхе 6 колхозра кăна парниксем пур. Вĕсем те кивĕлле майсемпе тунăскерсем. Çитес сезон валли вĕсене япăх хатĕрлеççĕ. Чылайăшне юсамалла, тасатмалла. Маленков ячĕпе тăракан колхозра кăна типовăй проект тăрăх теплица тунă.

Мĕншĕн-ха районти колхозсенче парниксемпе теплицăсем сахал? Колхозсем пахча çимĕç культурисене лартса тăвас ĕçе ку таранччен хакламан. Малта пыракан Буденный ячĕпе тăракан колхозăн та парниксемпе теплицăсем çук. Май çукран туман-ши вĕсене? Пачах уншăн мар. Кунта пахча çимĕç туса илес ĕçе хакламаççĕ. Вĕсене лартса тумалли плана колхоз çулсеренех тултармасть. Правлени пахча çимĕç лартса тăвас ĕçе хакланă пулсан, колхозра тахçанах парниксемпе теплицă тума пултарнă.

Районти пур колхозсенче те помидор лартса ӳстерме пулать. Анчах парниксемпе теплицăсем çук пирки çак хаклă çимĕçе лартса тумаççĕ. Купăста тата ытти пахча çимĕç культурисен калчисене чылай колхозсенче ĕлĕкхи майсемпе — пантесем çинче ӳстереççĕ.

Районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ колхозсенче пахча çимĕç культурисем лартса тăвас ĕçе те, парниксемпе теплицăсем тăвассине те ертсе пымасть. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хамăр çĕршывăн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен постановлени йышăннăранпа сахал мар вăхăт иртрĕ. Ку таранччен пахча çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе начар ĕçленĕ пулсан, çак тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен шутлама халĕ вăхăт ĕнтĕ. Çитес сезон валли парниксемпе теплицăсем кăçал туса хатĕрлес пулать.

— Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви парниксемпе теплицăсем тума план ярса паман-ха. Теплицăсем тăвасси çинчен пĕлместпĕр,—тесе лараççĕ районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕнче. Колхозсем вара районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ план парасса кĕтеççĕ. Парниксемпе теплицăсем тума нимçта та строительство материалĕсем хатĕрлемен, вĕсене мĕнле вырăна туса лартмаллине те палăртман.

Парниксемпе теплицăсем тума строительство материалĕсем район территорийĕнчех тупма пулать. Кĕскен каласан, пахча çимĕç лартса тăвас ĕçе лайăхлатмалли, парниксемпе теплицăсем тумалли майсем пур. Çав майсемпе усă курни, парниксемпе теплицăсем тăвас ĕçе пуçарса конкретлă ертсе пыни кирлĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.
(Хамăр корр.).

Кантăр—тупăшлă культура

Çĕршыври халăх хуçалăхне аталантарас, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес ĕçре техникăлла культурăсем акса тăвасси пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Красноармейски районĕнчи чылай колхозсем техникăлла культурăсем акмалли лаптăка çулсеренех пысăклатаççĕ, тухăçлăхне те ӳстереççĕ. Кăçал районта кантăр акмалли лаптăк икĕ хут ӳснĕ.

Иртнĕ çулта «Досаево» колхозра кашни гектартан 8-шар центнер кантăр вăрри, 7,7-шер центнер сӳс туса илнĕ. Кантăр вăрри памалли обязательствăна 727 процент, сӳс памаллине 146 процент тултарнă. Çапла государствăна кантăр сутса артель 80 пин тенкĕ укса, 253 центнер тулă, 893 килограмм çу, сахăр тата чылай турантă илнĕ. Вăтамран кантăр акнă кашни гектар çĕр 6.207 тенкĕ тупăш панă. Çакă вăл хуçалăхри мĕнпур тупăшсен 37 процентĕ пулать.

Пысăк тухăçлă кантăр туса илме агротехникăлла ĕçсен комплексне пĕтĕмпех пурнăçлани кирлĕ. «Досаево» колхозра акмалли çĕре тĕрĕс суйласа илеççĕ. Кантăра Сурăм шывĕн айлăмне, вырăнти удобренисемпе çителĕклĕ çемçетнĕ çĕр çине хĕреслĕ майпа акнă. Гектар çине 2 центнер вăрлăх кĕртнĕ.

«Волга» артельте кăçал кантăра пĕтĕмпех кĕрхи çĕртме тунă, нумай тислĕк тăкса тарăн сухаланă лаптăк çине вырăнти вăрлăхпа акнă. Акас, калчине пăхас, кантăр татса çапас тата çийĕнчех шыва хутас ĕçсене вăхăтра тунă. 30 гектар çинче кашни гектартан 5 центнер вăрă, 7,4 центнер сӳс туса илнĕ. В. Романов юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади вара гектар çинче 9,2 центнер вăрă, 8,6 центнер сӳс илнĕ.

Колхоз государствăна кантăр продукцийĕ памалли кăçалхи плана 2,5 хут ирттерсе тултарнă хыççăн килес çул акма паха вăрлăх хатĕрлесе хунă.

Çак культура кăçал колхоза 400 пин тенкĕ тупăш пачĕ. Кунсăр пуçне государствăран нумай тулă, çу, сахăр, турантă илнĕ. Çапла вара кашни гектар çĕр 13 пин тенкĕ тупăш панă. Кăçал завода кантăр сӳсне чи пысăк сортпа панине те асăнмасăр хăварма çук.

Колхоз укçа-тенкĕ çителĕклĕ тытакан пулчĕ. Вăл пайланман фонда кирлĕ чухлĕ укçа хыврĕ, капитальнăй строительство валли те чылай уйăрчĕ. Кăçал çĕнĕрен автомашина туянчĕ, пăрусем валли стандартлă вите тунă, улма-çырла садне чылай пысăклатнă.

Кантăр туса илес тĕлĕшпе ĕçлекенсене пурлăх енчен хавхалантармалли йĕркепе чылай укса панă. М. Ефремов колхозник, акă, кантăр плантацийĕнче ĕçлесе тунă 90 ĕçкунĕсем тăрăх 1.440 тенкĕ укса илет.

Анчах пур колхозсенче те кантăршăн çапла тăрăшаççĕ теме çук-ха. Хăшпĕр артельсенче техникăлла культурăсем акмалли плана çулсеренех тултармаççĕ, агротехникăлла ĕçсене кирлĕ пек туман пирки, вĕсен тухăçне ӳстереймеççĕ.

Районта кантăртан пысăк тупăш илмелли пысăк майсем татах та пур. Кантăр туса илес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен колхозсемпе бригадăсен опытне сарас енĕпе нимех те туман-ха. МТС колхозсене техникăлла культурăсен тухăçне ӳстерес ĕçре çителĕксĕр пулăшать. Кантăр татас, çапас ĕçсене механизацилемен. Кантăр вăррине çĕнĕ меслетсемпе — анлă ретлĕ тата хĕреслĕ майсемпе акмаççĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтерсен районти колхозсем кантăртан тата пысăкрах тупăш илесси паллă.

Халĕ кашни колхозрах ялхуçалăх специалисчĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсен колхозсен экономикине çирĕплетме пулăшакан пур майсене те туллин ĕçе кĕртме тăрăшмалла. Кантăр тухăçне ӳстересси çак майсенчен пĕри пулса тăрать.

Р. АРХИПОВ,
агроном.

Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне ирттерсе тултартăмăр

Кăçалччен эпĕ рядовой тракторист пулса ĕçленĕ. Кăçал мана виççĕмĕш трактор бригадин бригадирĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартрĕç. Бригадăна виçĕ трактор, пĕр комбайн, пĕр молотилка, икĕ сеялка çирĕплетсе панă. Эпир «Гвардия» тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенче ĕçлетпĕр. Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне илсенех, эпĕ ăна мĕнле ĕçлесен тултарма май пурри çинчен шухăшласа пăхрăм. Хамăн шухăша трактористсене каласа патăм. Хамăр умма вăхăтпа пĕлсе, машинăсемпе туллин усă курас тĕллев лартрăмăр. Хире тухиччен чылай малтан колхоз правленийĕсемпе тата уйхир бригадирĕсемпе пĕрле ака-суха тумалли лаптăксене палăртрăмăр. Кашни трактористa ăçта тата мĕн чухлĕ ĕç тумаллине кăтартса панă.

Сураки тунă чухнех трактористсем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Кашни нумайтарах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшрĕç. Ăмăрту мĕнле пынине куллен трактористсене пĕлтерсе тăнă. Бригадăри 6 тракторист ака-суха тата ытти ĕçсене тунă çĕрте яланах ĕç нормине ирттерсе тултарса пычĕç. П. Пихтеровпа С. Петрова трактористсем, А. Еропанов комбайнер кулленхи нормăна 115—120 процент тултарса ĕçлерĕç.

Бригадăра социализмла ăмăрту анлăн сарăлни мĕнпур ĕçсене вăхăтра та пахалăхлă тума, плана ирттерсе тултарма май пачĕ. Çулталăкри плана пирĕн бригада 105 процент тултарчĕ Хăшпĕр ĕçсене планпа пăхниичен чылай ирттерсе тунă. Планпа 190 тонна силос хывмалла пулсан, 250 тонна хывнă. Кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана 123 процент тултартăмăр.

Трактористсем машинăсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесех тăраççĕ. Пирĕн машинăсем пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕç.

Трактор бригади ăнăçлă ĕçлесси механизаторсемпе колхозниксем хушшинчи туслăх çирĕп пулнинчен те килет. Колхоз правленийĕсем шыв тата горючи, вăрлăх турттаракансем пулса ĕçлеме пултаруллă колхозниксене уйăрчĕç. Прицепщиксем пулса ĕçлеме те ĕçе юратакан çамрăксене çирĕплетсе пачĕç. Вĕсем пирĕн бригадăра сураки пуçланнăранпах пĕр ушăнмасăр ĕçлерĕç.

Эпир тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр. Бригадăри механизаторсем пысăк обязательствăсем илчĕç. Сăмахран, П. Пихтеров тракторист пĕр вăхăтрах машиновед пулса ĕçлет. Вăл 445 тонна авăн çапса, плана 148 процент тултарчĕ. Ун хыççăн татах 255 тонна тырă çапма обязательство илчĕ.

Колхозсем тырпул тухăçлăхне хăпартасси пирĕн ĕçрен нумай килет. Çавна эпир пурте лайăх ăнланатпăр. Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн, эпир колхозсене çуракине хатĕрлес ĕçре пысăк пулăшу парăпăр. Вĕсене вăрлăхсем сортлама. хире тислĕк кăларма, юр тытма пулăшатпăр.

П. ПЕТРОВ,
Сĕнтĕр МТС-ĕнчи III-мĕш трактор бригадин бригадирĕ.

Çĕнĕ пилĕкçуллăхри стахановецсем

ПУЛТАРУЛЛĂ БРИГАДИР

Антонина Михайловa ятне Канашри «Швейник» артельте ырласа асăнаççĕ. Чăваш хĕрĕ техникăна алла илсе, ытти хĕрсене те халăх валли илемлĕ те лайăх кĕпе-тумтир çĕлеме вĕрентнĕ.

Антонина пĕчĕкренех çĕвĕ çĕлеме юратнă. Çавăнпа вăл 1942 çулта «Красный воин» артеле ĕçлеме кĕрет. Пĕр уйăх çурă вĕреннĕ хыççăн, вăл хăй тĕллĕн ĕçлеме тытăннă.

— Антонина — пултаруллă хĕрача. Унăн аллисем—ылтăн аллисем,—теççĕ ун çинчен артельте ĕçлекенсем.

1951 çултанпа вăл «Швейник» артельте ĕçлет. Малтанах ăна бригадир помощникĕ пулса ĕçлеме лартаççĕ. Кунта вăл хăйĕн пултарулăхне кăтартать. Çав çулхинех ăна Горький хулине вĕренме янă.

Хаçатсенче Жандаровăпа Агафонова юлташсем çĕнĕлле ĕçлеме пуçлани çинчен çыраççĕ. Ку паха пуçарăва бригадăрихĕрсем ырланă, продукци пахалăхне лайăхлатма, материал перевотлеме сăмах панă. Çĕвĕçсем материалăн кашни татăкĕпех ĕçре усă курма тытăнаççĕ. Касnă чухне кашни фуфайка пуçĕнче икĕ сантиметр сарлакăш икĕ татăк тухать. Ку татăксемпе ниçта та усă курма май çук пек туйăннăть. Бригадир сĕннипе çав татăксемпе ваткăлла шăлавар çыххисене тунă çĕрте усă курма тытăнаççĕ.

Иртнĕ çулсенче цех продукци туса кăлармалли плана тултарса пыраймаи. Кун çинчен Антонина Михайлова нумай шухăшланă. Вăл ĕç хăвăртлăхне ӳстерес енĕпе çĕнĕ меслет шыранă. Хăйĕн шухăшĕ çинчен цех заведующине каласа панă.

— Мĕн тумалла-ха пирĕн?—иккĕленсе ыйтнă Савелий Трофимов.

— Кĕпе-тумтире пĕр çĕвĕç кăна çĕленипе ĕç хăвăртлăхĕ нихçан та ӳсме пултараймасть,—витĕмлĕн каланă бригадир.—Кашни çĕвĕçе уйрăм операцисем тутармалла.

Савелий Трофимов кун çинчен А. Ланцева техноруха каласа парать. Техноруk бригадир сĕнĕвĕпе килĕшет. Артель правленийĕ ку меслете ырласа, унпа усă курма сĕнет Кун хыççăн ĕç тухăçлăхĕ хăвăрт ӳсет. Сменăра 8—10 фуфайка çĕленĕ пулсан, 24 фуфайка таран çĕлеме тытăннă. Ытти кĕпе-тумтирсем çĕлес хăвăртлăх та часах ӳсет. Çĕвĕçсем ĕç нормисене куллен 150 процентран кая мар тултараççĕ. Цех чылайранпа ĕнтĕ правленин куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать.

Бригадир ĕçĕ çăмăл мар. Вăл бригадăна ертсе пынипе пĕрлех, ытти çĕвĕçсем çĕленĕ кĕпе-тумтир пайĕсене пĕр çĕре пухса, хатĕр продукци туса кăларать. Кунта вара ĕçе лайăх пĕлни, тимлĕн ĕçлени кирлĕ. Кĕпе-тумтир пахалăхĕ çакăнтан нумай килет.

Хăшпĕр çĕвĕçсем машинăпа тĕрĕс усă курма пĕлмеççĕ: таса мар тытаççĕ, çу сĕрмеççĕ, машина йĕпписене час-часах хуçаççĕ. Михайлова бригадинче ĕç пачах урăхла. Çĕвĕçсем смена ушăннă чухне машинăна яланах тасатаççĕ, тĕрĕслеççĕ. Машина йĕппине хуçни вара вĕсемшĕн лайăх мар ĕç тунă пекех туйăнать. Ку бригада производство планне тăтăшах тултарса пырать. А. Платонова, О. Трофимова юлташсем паллă çĕвĕçсем шутланаççĕ.

Антонина Михайлова хăйĕн квалификацине, политикăлла пĕлĕвне ӳстерсе пырать. Халĕ вăл кружокра вĕренет.

И. КУЗЬМИН.

Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парар

Çĕршыври вăрманпромхозсем çултан-çул çĕнĕрен те çĕнĕ техникăпа кĕçнăшалланаççĕ. Рабочисемпе специалистсем валли пурăнмалли çуртсем нумай лартаççĕ, ĕлĕкрех сĕм вăрман пулнă вырăнсенче çĕнĕ поселоксем ӳсse лараççĕ. Кашни вăрманпромхозрах техникăна алла илнĕ, пуçаруллă та пултаруллă кадрсем ӳсse çитĕнчĕç.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче пирĕн республикăри вăрман промышленноçĕнче те пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Йывăç касса хатĕрлеме, турттарса кăларма тата тиесе пушатма вăрманпромхозсене тĕрлĕ йышши машинăсемпе механизмсем нумай уйăрса панă. Йывăç хатĕрлекен предприятисенче çĕршер километр тăршшĕ çулсем хывнă. Халĕ «Чувашлес» треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозсенче çеç сакăр пине яхăн рабочи ĕçлет.

Хăвatлă техника тата ăна алла илнĕ кадрсем пурри, паха çулсем хывни вăрман хатĕрлес ĕçе хĕлĕн-çăвĕн туса пыма, сезонлăха чакарма паха майсем туса парать. Анчах çав условисемпе республикăри вăрманпромхозсем кирлĕ пек усă курмаççĕ.

Нумаях пулмасть СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ вăрман промышленноçĕ ĕçне юсса пынине пĕтермелли мерăсем çинчен ятарласа постановлени йышăнчĕç. Çав постановленире вăрман промышленноçĕ ĕçне юсса пынине тата çитменлĕхсене пĕтермелли майсене уççăн кăтартса панă. СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ палăртнă çитменлĕхсем пирĕн республикăри вăрман промышленноçĕнче те пур. Йывăç ĕçсене механизациленĕ пулин те, ĕç тухăçлăхĕ юлашки темиçе çул хушшинче пĕр вырăнтах тăрать. Ялан ĕçлекен рабочисенчен çурри яхăн, сезонниксенчен 80 процентчĕ ытла ĕç нормине тултармасть. Вăрманпромхозсем ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курмаççĕ: нумай рабочисене йывăç хатĕрлес вырăнне урăх ĕçсем тытараççĕ. Уйрăмах техникăпа япăх усă курнине палăртас пулать. Кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче автомашинăсем 56 процент, тракторсем—61 процент ахаль ларнă. Машинăсемпе тата механизмсемпе Пăрачкав, Алтышево тата Приволжски вăрманпромхозсем пуринчен япăх усă кураççĕ. Кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче трест механизмсемпе усă курмалли задание автомашинăсем енĕпе — 79,8 процент, лебедкăсем енĕпе—72,4 процент, тракторсем енĕпе—66,4 процент çеç пурнăçланă.

Нумай çĕрте машинăсемпе механизмсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсамаççĕ. Çавăн пирки вĕсем хăвăрт пăсăлаççĕ, тухăçлă ĕçлеймеççĕ. Техникăпа япăх усă курнин тĕп сăлтавĕ вăл—ăста механизаторсем çителĕклĕ вĕрентсе хатĕрлеменни, малта пыракансен опычĕпе меслетне анлă сарманни, кадрсем часчасах улшăнса тăни пулать. 1949—1952 çулсенче треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозсенче çĕнĕрен илнĕ кашни тăватă çынтан виççĕшĕ ĕçрен тухса кайнă. Нумай вăрманпромхозсенче рабочисем валли пурăнма тата культурăллă канма паха майсем туса паман, ĕнсетре пурăнакан рабочисене йывăç хатĕрленĕ вырăна машинăсемпе турттарас ĕçе йĕркелемен.

Хăшпĕр руководительсем вăрман промышленноçĕнче йывăç хатĕрлемелли условисем тĕпрен улшăннине ăнланса илмен, халĕ те кивĕлле ертсе пыма пăхаççĕ. Механизмсене усă курассине хирĕç тăнисем те тĕл пулаççĕ. Уйрăм директорсем, главнăй инженерсем, технорукcене мастерсем çĕнĕ техникăна пĕлмеççĕ, унтан хăраççĕ. нумай ĕçе сезонла рабочисемпе тума пăхаççĕ.

Йывăç хатĕрлевĕнчи чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл—тĕрлĕ операцисене комплексла механизацилеменни. Туратсене иртес, пĕренесене шуратас ĕçе пачах механизацилемен. Йывăç тиесе пушатас ĕçе те нумай çĕрте механизацилемен. Çавăн пирки хăватлă механизмсем часчасах ахаль лараççĕ.

Ĕлĕкрех, механизмсем пулман чухне, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра çеç вăрман хатĕрленĕ. Халĕ пирĕн вăрманта хĕлĕнçăвĕн татти-сыппи сĕр ĕçлеме мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Çапах та çуллахи вăхăтра йывăç касса хатĕрлеме те, турттарса кăларма та хĕллехинчен çăмăлрах. Апла пулин те, вăрманпромхозсенче çуллахи вăхăтра машинăсемпе тата механизмсемпе туллин усă курмаççĕ. Çакă вăл «Чувашлес» трест плансене тĕрĕс мар тушинчен те сахал мар килет.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ вăрман промышленноçĕ халăх хуçалăхĕн хăвăрт ӳсse пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пынине пĕтерме хушрĕ. «Чувашлес» трестпа вăрманпромхозсен руководителĕсем çакăнтан тивĕçлĕ вывод туман. Трест кăçалхи 10 уйăхра йывăç касса хатĕрлемелли плана 88,2 процент, касnă йывăça турттарса кăлармалли плана 85,9 процент çеç тултарнă. 12 вăрманпромхозран Çĕмĕрле вăрманпромхозĕ çеç плана тултарнă. Çапла вара пирĕн республика Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăна кĕчĕ.

«Чувашлес» трест вăрманпромхозсене çителĕксĕр ертсе пырать. Трест аппарачĕ оперативлă ĕçлемест, предприятисене пулăшу памасть, тĕрлĕ хутсем çырса вăхăта ытларах ирттерет, производствăна лайăхрах йĕркелес тĕлĕшпе вăрманпромхозсем лартакан ыйтусене çийĕнчех татса памасть. Трест тата вăрманпромхозсен руководителĕсем технологи дисциплинине çирĕплетессишĕн кĕрешмеççĕ. Кварталсемпе делянкăсене касма лайăх хатĕрлесе çитерменнипе рабочисем тухăçлă ĕçлеймеççĕ. Уйрăмах çĕнĕ çулсем тăвас, кивисене юсас ĕç юлса пынине палăртас пулать. Çулсем юсавлă марри машинăсемпе туллин усă курма чăрмантарать, механизмсене вăхăтсăр юрăхсăра кăларать. Вăрманпромхозсем плана тултарас тĕлĕшпе юлса пыни партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменнинчен нумай килет. Вăрманпромхозсенчи парторганизацисем администраци ĕçне кирлĕ пек тĕрĕслесе тămаççĕ, умра тăракан задачăсене чыслă пурнăçласа пыма коллективсене мобилизацилемеççĕ.

Вăрманпромхоз директорĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсенчен нумайăшĕ государство планне ăнăçлă тултарса пырассишĕн пуçламăш парторганизацисемпе коммунистсен рольне ӳстерме тăрăшмаççĕ, ĕççыннисене воспитани парас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ответлăха туймаççĕ.

Вăрман хатĕрлекенсем хушшинче социализмла ăмăртăва кирлĕ пек йĕркелемен. Вăрманпа хут промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн обкомĕ (председателĕ Ильин юлташ) социализмла ăмăртăва сарма, рабочисем хушшинче культурăлла-массăлла ĕçе вăйлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

1953-мĕш çулăн тăваттăмĕш кварталĕ вĕçленесси инçе юлмарĕ. Малта пыракан вăрманпромхозсен коллективĕсем, стахановецсемпе производство новаторĕсем çулталăкри плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн, халăх хуçалăхне паха йывăç ытларах парассишĕн ăмăртаççĕ.

«Чувашлес» трестăн тăваттăмĕш кварталта, виççĕмĕш кварталтипе танлаштарсан, йывăç чылай нумайрах хатĕрлемелле. Çак кварталта ĕçлеме те йывăр тарах. Производство планне хĕллехи санталăкра та ăнăçлă тултарса пымалла тăвас тесен, çулсене юр хӳса тултарасран хӳтĕлемелли щитсем туса хатĕрлемелле, бульдозерсене, тракторсене, треугольниксене юсаса хумалла, çуна çулĕсене йĕркелесе çитермелле.

Йывăç турттаракан машинăсемпе тата механизмсемпе татти-сыпписĕр, туллин усă курасси касса хатĕрленĕ пĕренесен çул хĕрринчи запасĕсем çителĕклĕ пулнинчен сахал мар килет. Вăрман пункчĕсен руководителĕсемпе мастерсен механизаторсем валли тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса памалла. Пĕренесене хăвăрт тиесе пушатмалла, машинăсене пĕр минут та ахаль лартмалла мар. Ăмăртура кам малта, кам юлса пынине пĕтĕм коллектив куллен пĕлсе тăтăр, малта пыракансен опычĕпе кашни механизатор анлă усă куртăр.

1953 çулхи IV-мĕш кварталта тата 1954 çулхи 1-мĕш кварталта вăрманпромхозсенче пиншер рабочи, çĕршер колхозник ĕçлемелле. Трестпа вăрманпромхозсен руководителĕсем рабочисемпе колхозниксене пурăнма лайăх условисем туса пама тивĕç. Общежитисенче выртса канмалли инвентарь çителĕклĕ пултăр. Кашни общежитире яланах вĕретнĕ шыв, таса матрац, одеяло, простыня пулмалла. Тумтирсене, чăлхасемпе тăласене, çăматăсене типĕтме ятарласа сушилкăсем тăвас пулать. Рабочисемпе колхозниксем кашни эрнере мунча кĕме пултарччăр. Клубсемпе хĕрлĕ кĕтессенче хаçатсемпе журналсем, кĕнекесем çителĕклĕ пулччăр. Вăрман хатĕрлекенсем радио итлеме, кинокартинăсем, спектакльсем, концертсем курма, лайăх лекцисемпе докладсем итлеме пултарччăр.

Уйрăмах столовăйсен, котлопунктсен, ларексемпе магазинсен ĕçне лайăх йĕркелени кирлĕ. Кашни рабочи, колхозник вăрмантах вĕри апат çиме пултартăр. Магазинсемпе столовăйсенче таса та йĕркеллĕ пултăр.

Хăшпĕр вăрманпромхоз руководителĕсем рабочисен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшмаççĕ. Первомайски, Пăрачкав, Вăрнар, Приволжски вăрманпромхозсенче столовăйсемпе ларексем япăх ĕçлеççĕ. Анчах РСФСР Вăрманпа хут промышленность министерствин Чăваш республикинчи УРС-ĕ (начальникĕ Никандров юлташ) çав çитменлĕхпе килĕшсе тăрать, суту-илӳ работникĕсен ответлăхне ӳстермест.

Правительство йышăннă тăрăх, 1953 çулхи IV-мĕш кварталпа 1954 çулхи 1-мĕш кварталта колхозсен хăйсен лавĕсемпе государство валли вăрман турттармалла, йывăç касса хатĕрлеме вăрманпромхозсене организованнăй набор тăрăх колхозниксем уйăрса памалла. Нумай райисполкомсемпе КПСС райкомĕсем çак задание пурнăçлама кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Улатăр районĕнчен вăрманта куллен 50 çын лавпа ĕçлемелле. Ноябрĕн 9-мĕшĕнче 8 лав çеç ĕçленĕ. Элĕк районĕнчен пурĕ 135 çын ĕçлемелле, чăннипе 12 çын çеç ĕçлет. Канаш, Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Шăхасан тата Вăрнар районĕсем вăрмана пĕр лав та уйăрса яман.

Ялхуçалăхне малалла аталантарма, халăха кирлĕ таварсем çителĕклĕ туса кăларма, çĕнĕ предприятисем, пурăнмалли çуртсем лартма çĕршыва йывăç материалсем нумай кирлĕ.

Вăрман промышленноçĕ юлса пынине пĕтерессн—республикăри пĕтĕм партипе совет общественноçĕн тивĕçĕ. КПСС райкомĕсемпе райисполкомсен вăрман хатĕрлекен предприятисен ĕçĕпе тĕплĕнрех интересленмелле, унти çитменлĕхсене хăюллăн палăртмалла тата çийĕнчех пĕтерме пулăшмалла, производствăна тĕрĕс йĕркелеме пулăшмалла, малта пыракан коллективсен тата производство новаторĕсен опытне анлă сармалла.

П. ЧИЧИКИН,
КПСС обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕ

КАПКĂН СТРАНИЦИ

ШĂПĂРЛАНСЕМ

Юптару

Çулпа тайкаланса Ашак пырать,
Ăна Така курать.
— Салам хисеплĕ Ашака!
Ăçта капла васкатăн?—тет Така.
— А, хамăр яла!—тет лешĕ, —
Салам, салам.
Нумай пулать тĕлпулманни, нумай!
Анчах те ман васкамалла...
Ăсат пăртак, калаçăпăр çул май. —
Кӳс хайскерсем утаççĕ юнашар,
Хыçран тусан вĕçет пăр-пар!
— Ăçта ĕçлен эс халь? —
ыйтать Така, —
Кив вырăнтан кăларнă тет сана...
— Да... Хаклама пĕлмерĕç Ашака.
Анчах ку ним те мар мана;
Суратăп эп вĕсем çине!
Тен; илтнĕ пуль, лере—начальникре—
Ман арăмăн тăванĕ ларнине?
Халь эпĕ—пысăкрах ĕçре!
А эс ăçта çĕмĕрттеретĕн халь? —
Така илет мĕк-мак кулса:
— Çав вырăнтах! Леш «çылăха»
Каçартăм эрехпе çуса.

Сахал-им «кучченеçлĕх» ман складра?
Çăра уççи ак, хамăн алăра.
Хăйне кура Такан та ăсĕ пур,
Ташласа çеç пурнать вăл —
пыр та кур! —
Каппайланса, кула-кула
Шăпăрлансен утаççĕ малалла.

* * *

Тăван хӳтлет-и тăванне
Начальникре ларса,
Е тепĕри аслисене
Юрастăн «кучченеç» парса —
Пурне те хĕрт эс, ан хĕрхен,
Çунтар ирсĕрлĕхе тĕпрен!

А. КАЛКАН.

Ни вырăсла, ни чăвашла

Чăвашла маннă, вырăсла вĕренеймен ывăлĕ патне пĕррехинче амăшĕ хăнана пырать. Картишне тухать те, пушмак пăру ача кипкине чăмласа тăнине курать.

— Пăрчча, мур, мĕн хăтланатăн!—тет вăл пăрăва хăваласа.

Çакна ывăлĕ курать.

— Мама! Мы ява Маша совем. Наш телка чувашски не снает, ковори вырăсла,—тет вăл пăрушне ачашласа. Анчах пăрушĕ ммак! тесе илет те, янк! тапса ярать.

Амраса ӳкнĕ хуçа:

— Ах, шуйттан пăрушĕ, епле хытă тапать,—тесе хурать тĕп чăвашла.

ЧĔРЕП КУÇМИ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат вăхăтран вăхăта «Капкăн страници» пичетлесе пыма тытăнать. Сатирăпа юмор совет литературин пĕр пысăк пайĕ пулса тăма тивĕçлĕ, анчах та халĕ чăваш литературинче вăл çакна нурайлаттăр-ха.

Партин XIX-мĕш съездĕнче тунă докладра Г. М. Маленков юлташ, совет писателĕсен умне пысăк задачăсем лартса, акă мĕн каланă: «Пире совет саманинчи Гогольсемпе Щедринсем кирлĕ, вĕсем пурнăçри юрăхсăр явленисене, пĕнтăхса кайнисене, хытса ларнисене, малалла кайма чаракан мĕнпур чăрмавсене сатира вут-хĕмĕпе çунтарса тăнă пулĕччĕç».

Пирĕн пурнăçра пысăк ӳсĕмсемпе, пысăк çитĕнӳсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те нумай-ха. Çав çитменлĕхсене пирĕн кулленхи ĕçре те, пичет урлă та витĕмлĕ критикăпа, йĕплĕ сăмахсемпе пĕтерсе пыма тăрăшмалла. Тĕрлĕ чиновниксене, икĕ питлĕ бюрократсене, тĕрлĕ сĕтĕрçĕсене, пуш сăмах çапма юратаннисене, капитализм тăнчинчен юлнă хăнăхусене, кивĕ йăласене, мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлнă çынсене, вĕренме, ӳсме тăрăшман çынсене, критикăна хĕсекенсене, коммунизмăн хăватлă утăмне тĕрлĕ майсемпе чарма пăхакансене хирĕç пирĕн сатирăн çивĕч хĕçпăшалĕпе кĕрешмелле, вĕсенчен кулмалла, вĕсене питлемелле, намăслантармалла.

Çавăнпа та редакци писательсемпе художниксене, пирĕн хаçата вулакансене çак ĕçе пилвесе хутшăнма чĕнет, тĕрлĕ çитменлĕхсене кăтартса паракан материалсем ярса пама сĕнет. Совет çыннисене кĕрешӳре тата ĕçре чăрмантаракансене пурне те хамăрăн Капкăна лектерер!

Тихейкин критикăна йышăнать...

Мирон Миронович Тихейкин, мĕнле калас,—пысăках та мар, пĕчĕкех те мар завод директорĕ. Çак вырăнта вăл чылайранпах ĕçлет ĕнтĕ, пилĕк çул та ытла. Юлашки вăхăтра Тихейкина мухтасах та каймаççĕ, хурласах та пăрахмаççĕ: вăл ертсе пыракан предприяти, ыттисемпе танлаштарсан, мала та иртсе каймасть, кая та тăрса юлмасть, плана шăп та лăп тенĕ пек тултаркаласа пырать.

Тихейкина хăй ĕмĕрĕнче нумай хурланă, нумай критикленĕ, тепĕр чухне хытах ятланă. Хăйне ятланă чухне вăл яланах:

— Тĕрĕс, питех те тĕрĕс, хаклă юлташсем. Ку ĕçшĕв мана тата хытă критиклемеллеччĕ. Анчах çакна та манас марччĕ: çын ĕçлет пулсан, вăл йăнăшма та пултарать. Халĕ ĕнтĕ эсир мана критиклерĕр, вĕрентрĕр, йăнăша ăнланса илме, тĕрĕс çул çине тухма пулăшрăр. Критикăна юрататăп эпĕ,—тесе шăлса якатать.

Тихейкин ертсе пыракан заводра нумай пулмасть профсоюз членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ Мирон Мироновича хальхинче каллех критиклерĕç.

Трибуна çинче вăтам çулти хĕрарăм.

— Юлташсем, хам сăмахра эпĕ кадрсемпе ĕçлес ыйту çинче чарăнса тăрасшăн. Тӳррине тӳррипех каласан, пирĕн хисеплĕ Мирон Миронович заводри хĕрарăмсем çинчен пачах маннă. Юлашки пилĕк-ултă çул хушшинче пирĕн хĕрарăмсем пур тĕлĕшпе те нумай ӳсрĕç. Анчах эпир, пурте тенĕ пекех, пилĕк-ултă çул каялла ăçта ĕçленĕ, халĕ те çавăнтах ĕçлетпĕр, пире ӳсме памаççĕ, — хĕрнĕçемĕн хĕрсе пычĕ хĕрарăм. Юлашкинчен вăл президиумра куçлăхне шăлкаласа ларакан директор енне çаврăнчĕ. — Мирон Миронович, хĕрарăмсене те ответлă ĕçсем парасси çинчен шутласа пăхма тахçанах вăхăт ĕнтĕ.

Тухса калакансем татах та нумай пулчĕç. Вĕсем хĕрарăм-кадрсем пирки хускатнă ыйтăва тата çивĕчлетрĕç. Анчах критикăна хăнăхса çитнĕ Тихейкин шуралмарĕ те, хĕрелмерĕ те. Юлашкинчен вăл сăмах тухса каларĕ, яланхи пекех хăйне критикленĕшĕн тав турĕ, юсанма сăмах пачĕ.

Хăй пекех хулăн та хăй пекех пысăках мар арăмĕ Мирон Мироновича килте кăмăллă кĕтсе илчĕ.

— Мироныч, каярах юлтăн-çке. Телефонпа та пĕлтермерĕн,—терĕ вăл упăшкин вилсе кĕнĕ-кĕменех.—Эсĕ паян ытларах ĕшеннĕ. Ĕçӳ çапла мар-и ара... Апатланха, кăштах выртса кансан, ывăнни иртет вăл...—директор арăмĕ калаçа-калаçах кухньăна тухма тăчĕ, анчах Мирон Миронович ăна чарчĕ.

— Чим, Соня, çиесси мура каймĕ, лар-ха.

Тихейкин килĕнчи çыру сĕтелĕ хушшине кĕрсе ларчĕ, арăмĕ—ăна хирĕç.

— Соня, кала-ха, сан йăмăку Клара машинисткăра миçе çул ĕçлет-ха çав? — ыйтрĕ Мирон Миронович.

— Пиллĕкмĕш çине кайрĕ пулас. Мĕне кирлĕ пулчĕ-ха ку?

Тихейкин ответ памарĕ. Блокночĕ çине çеç паллă туса хучĕ. «Машинисткăра ĕçлекен Маршева Кларăна директор приемнăйне куçарас». Унтан сутă пуçне çĕклерĕ те:

— Мĕнле, Соня, Клара ман приемнăйне куçма килĕшĕ-и?—тесе ыйтрĕ.

— Килĕшмесĕр, паллах, килĕшет. Унта ĕç укçи ытларах-çке-ха. Машинкипе ĕçлесе айккинчен тупма пултарать,—ответ пачĕ арăмĕ.

— Сан аппу упăшкин йăмăкĕ миçе çул вĕреннĕччĕ-ха çав? — каллех ыйтрĕ Мирон Миронович.

— Елюк-и? Вăл çиччĕ те пĕтерейменччĕ пулас. Ку тата мĕншĕн?

Тихейкин каллех ответ памарĕ. Блокночĕ çине: «Сакăр çул техничкăра тасакăмăлпа ĕçленĕ Елена Яковлевна Тихоновăна общежити комендантчĕ туса хурас. Ку ĕçе вăл лайăх пĕлет»,—тесе паллă турĕ.—Проходнăйра ĕçлекен Иванова Верăна лабораторине куçарас, Киргизова Розăна контролер-браковщик туса хурас». Вăл çырма чарăнчĕ. «Вера—хам ывăл арăмин йăмăкĕ, Роза—шăллăм хĕрĕ. Тата кам пур-ха ман заводра...» Мирон Миронович тата нумайччен шутласа ларчĕ, анчах урăх никама та тупаймарĕ. «Малтанласа çитĕ-ха. Приказне ыранах кăларас. Хĕрарăмсене ĕçре хăпартманшăн текех критиклеймĕç ĕнтĕ мана»,—тесе шутларĕ те директор, арăмне апат пама хушрĕ.

Тихейкиншăн яланах çуллă пăтă пулĕши вара? Çук, хытă тăварланине те çисе пăхмалла пулать пулĕ.

Г. ПЛАСКИН.

ТĔЛ ПУЛЧĔÇ

— Салам, Тракка!
Ăçта чупан?
— Ан чар, Пракка,
Эп нарсудран.

Пĕлетĕн ху:
Ик арăм ман,
Таратăп эп алиментран.

А. САПСА.

МАШИНРАН ТУХМАСĂР, ЧУНПАЛА ÇУНМАСĂР...

Фельетон

1.

Сăнать никĕмĕш хутран
Кантăк витĕр пуçлăх.
Ытах ĕçсĕр тăнăран
Тасатать хăй куçлăх.

Кайрĕç вăрăма ĕçсем,
Пурпĕр план тулмарĕ.
Каçчен пĕр-ик колхоза
Çитсе килес мар-и?

Тут! тесе, терт курнă «ГАЗ»
Хапхара сас пачĕ.
Уçса лартрĕ пуçлăха
Шофер, çамрăк каччă.

— Кайрăмăр! «Хĕм» колхозра
Эп халех пуласшăн...
Çил тытас пек вашкăртса
Илсе кайрĕ «ямшăк».

Авăн çапать «Хĕм» колхоз,
Ĕç çинче вăл паттăр.
Курчĕ халăх: «Ав, килет,
Кам пултăр, çавах-тăр?..»

Халăх ун «ГАЗ»-не паллать,
Хăйне çеç курманччĕ.
Ак машина чарăнать,
Хирĕç—председатель.

— Ну, ĕçсем мĕнле, пĕлтер...
— Бурăр... Тăрăшатпăр...
— Тыттаратăн куçкĕрет,
Саботаж тăватăр!

— Чим-ха, иртенпех кунта
Сирĕн представитель,
Сăмахпа хыт пулăшать,
Калаçать вăл вичкĕн.

— Эс ан пӳл-ха, сан тата
Миçе тонна юлчĕ?—
Пуçлăх папкине тытать
(Таçта куçлăх пулчĕ!),

Кĕсйине вăл ухтарать
(Эх, мур, тăнă-юлнă!).
Председатель тавăрать:
— Пирĕн планĕ тулнă.

Виçĕмкун юлашкине
Ик машина ятăм.
Ан çиленĕр... сводкине
Кивввине пăхатăр...

— Ан çаптар, ытлашшине
Хăçан паран, тетĕп.
(Эх, ку уполминзагне,
Таврăнсан, лекет те...

Çук, вĕт, пуçлăх тухитчен
Сводка параймарĕç!).

— Мĕн эс çав тери савăнса кайнă?
— Ăçтан тупса вулас çав эрне каярах тухнă хаçата тесе çӳреттĕм. Акă вăл—витрина çинчех!

АПТРИ ПЕТРИ.

— Кӳршĕсем сан планринчен
Иртерсе ăсатрĕç.

Акă мĕн: васкат, васкат!
Пултаран, пĕлетĕп.
Тепĕр ик машин ăсат,
Ирпе тĕрĕслетĕп.

Ну, сывпул. Кӳр аллуна.
Ăнăçлăх сунатăп.
Кĕрес терĕм çула май,
«Çăлтăра» васкатăп.

2.

Кĕперпе каçать машин:
Уçă сас та кулă.
Тухнă халăх сыр хĕрне,
Хĕвĕшет çеç улăх.

Халăх сар йĕтĕн хутать,
Тăрăшать бригада.
Пуçлăх машинран тухать:
— Эсир мĕн тăватăр?

— Ăшша пиçрĕмĕр мар-и,
Кур, шыва кĕретпĕр.
Çулла пирĕн вăхăт çук,
Кĕркунне сикетпĕр,—

Тĕксе илчĕ пуçлăха
Пĕр хастар хĕрарăм.
Пуçлăх чĕлхи чулланать,
Сут çамки тарларĕ.

— Председатель ăçтарах?
— Тин кăна кунтаччĕ.—
Хуравларĕ пуçлăха
Йăрăс пӳллĕ каччă.

Çак йышра вăл—пĕр арçын,
Пуçлăх умне тухрĕ,
Как-нибак, районти чин,
Сепĕç сăмах юхрĕ:

— Хутасса хутатпăр та,
Суррине çапманччĕ...,
— Айăпĕ вăл—хăвăрта,
Малтан курмаллаччĕ!..

— Тĕплерех çав, хушнă тет!
«Хутăр йăпăр-япăр!»
Пĕр тесен, кирлех пулсан,
Халь ăк хăвăр çапăр...

Çаврăнчĕ те, кĕр! кăна
Хай машин хускалчĕ.
Хирелле вăл ыткăнать,
Ак куçран çухалчĕ.

Председатель утпала
Сикрĕ-тухрĕ хирĕç.
Пуçлăх пуçлăха паллать:
— Ак хăех килет-иç...

— Эсĕ мĕншĕн-ха капла,
Ху камне манатăн?
Тивĕç пултăн мухтава,
Ăсран тухнă ватă!

Председатель пĕр самант
Нимĕн те чĕнмерĕ.
— Ăнланмарăм эп сана,
Мĕн тата ситмерĕ?

— Пыр-ха эс кĕпер патне,
Ăнланмастăп тетĕн:
Çаптармасăр йĕтĕнне
Шывалла чикетĕн.

— Бригадир ответ тытать,
Актне хам çырсаччĕ
(Ха эс, çитнĕ вăл унта!—
Шутлать председатель).

Кăларатпăр ĕçĕнчен
Ыраптан хăйне те.
Йĕтĕнне, мĕн тăвас тен,
Халĕ вăл йĕпе те...

— Ну, юрать-ха. Эс каллех
Умрине курмастăн,
Акă...—сывлаcа илет
Пирĕн пуçлăх ассăн:

— Пуллине, карп тенине,
Тĕп тăвать-çке йĕтĕн?
Е пĕр пулă юмиччен
Мехелне эс кĕтĕн?

— Э-э, ăна эпир ĕнер
Сĕртерсех тыттарнă.
Вара... юлнă пеккине
Çĕн кӳлле куçарнă.

Пирĕн халь, пĕлетĕр-и,
Юнашар ик кӳлĕ.
Эпир пулă пасара
Кăларатпăр ӳлĕм!

— Ку аван-ха. Кунщăн тав...
Эс ĕçлен маттуррăн.
Мĕн-и çак... Сирĕн унта...
Тытнă пекки пур-и?

Эсĕ темĕн ан шутла,
Ахальтен каларăм.
Питĕ юратать ара
Çав пулла ман арăм.

Председатель шофера
Хут татки тыттарчĕ.
Машин тепĕр самантра
Ял пуçне сывхарчĕ.

Тата çичĕ колхоза
Пуçлăх çитрĕ пулĕ.
(Тепĕр иккĕшне тухсан
Пăнтăхминччĕ пулă!)

— Эй, шофер «утна» хусам!
Учĕ пирĕн—хурçă!—
Çук çĕртен вĕçет тусан
Çисĕм пек пырусăн...

* * *

Сакăн пек пуçлăхсене
Час-часах куратпăр:
Савăнпа та сăмăпа
Сунтарса çапатпăр.

«ГАЗ» çинчен анмах тивет,—
Пленумра каларĕç.—
Халăхпа ĕçлемесен,
Вырăнтан антарĕç».

Куçлăхна эс тусантан
Тасатсах ларт, пуçлăх.
Сакăнта мĕн сырнине
Яр! кăтарттăр куçлăх!

Егор АФАНАСЬЕВ.
Стихвăн ШАВЛЫ.

— Хурах! Кĕпе юхса каять!..
— Эх, çав Шупашкар коммунхозне! Çу кунĕсем иртсе кайрĕç, вăл çаплах кĕпе пем ухмалли вырăн туса памарĕ.

ШТЫК ВАÇÇИ.

Страницăри ӳкерчĕксем П. СИЗОВĂН.

Куçук текех „вĕçес" çук!

КАЛАВ

Хура кĕркунне.

Час-часах çула тухса çӳрекен çынна çанталăк тени шухăшлаттаратех ĕнтĕ. Анчах паян эпĕ телейлĕ. Кунĕ, хам кĕтмен çĕртенех, тӳлек пулчĕ, тӳпере пĕр пĕлĕт таткĕ те çук—çуркуннехи пекех кăн-кăвак, тап-таса. Хуларан тухрăм кăна, çула май каякан машина тупăнчĕ. Вара эпĕ ун çине хăпăл-хапăл улăхса лартăм та, Иленкасси ялне каякан çул юппине çитиччен шоссе çулĕпе вĕçтертĕм.

Кунтан Иленкасси инçе мар, çичĕ çухрăмра кăна. Шоссерен пăрăнсан пуçах та каяймарăм пулĕ, малта пĕр лав пынине асăрхарăм. Урапа çине темĕнле икĕ ещĕк хунă. Патнерех çитсен эпĕ çакна куртăм: пĕри—шăвăç тытнă симĕс арча, тепри—йĕри-тавра пусмапа чĕркесе, кантрапа явăлласа çыхнă вăрăм ещĕк. Ещĕкĕн хĕрах аякки́нче тĕс кайнă пусма çине: «Ст. отпр., ст. назн.» тесе çырнă саспаллисем уççăнах палăраççĕ. Шăвăç тытнă симĕс арча çумне таянса пĕр арçын ларса пырать. «Ку çын е хăй таçтан инçетрен таврăнать е такам ялĕсене станцăран илсе килет»,—шухăшларăм хам ăшăмра.

Лавçă çитес çĕре çитме питех васкамасть пулас, тилхепине урапа ӳречинчен çыхнă та, хаçат пăхкаласа пырать. (Те чăнласах вулать ĕнтĕ?.. Юрать-ха, сулĕ такăр). Пăхма хăй пĕр хĕрĕхсенче кăна-ха, анчах вăл мĕн ĕçпе пурăннине сăнĕнчен те тумĕнчен те чухласа илме çук. Пуçĕнче «кубанка» çĕлĕк, çийĕнче—тахçан чиперех пулнă пуль те, халĕ йăлтах тĕсне-хăйне çухатнă кивĕ хăмăр пальто, урине—çунарçĕсенни пек, пĕç-кăн таран вунчаллă резина атă.

Чылай вăхăт лавпа юнашарах пыратăп пулин те, вăл мана асăрхамарĕ пулас, тен асăркасшăн та пулмарĕ-и: хаçат çине тирĕннĕ те пуçне çĕклесе те пăхмасть. Вара эпĕ:

— Ăçталла çул тытатăр?—терĕм хыттăнах.

— Ара, ăçталла пултăр, килелле! Хăвăр ăçталла? Çула май пулсан, ларăр юнашар, иккĕн-иккĕнех,—терĕ лавçă, çав самантрах аллинчи хаçатне кĕсйине пĕтĕрсе чикрĕ.

Ман кăмăла вăл ытла чĕмсĕр çынах пулмарĕ.

— Лашуна йывăр пулмĕ-и?—терĕм эпĕ урапа çине ларнă май, тиенĕ япаласем çине пуç сĕлтсе.

— Тем йывăрри пур! Калăпăшĕ кăна.

Темшĕн вăл шухăшне каласа пĕтермерĕ, тăпах чарăнчĕ.

Икĕ палламан çын тĕл пулсан, сывăхрах паллашиччен, сăмах-юмах сыпăнса пыман чухне, чĕлĕм е пирус туртса яраççĕ. Пĕри хăйĕнне сĕнет, тепри хăйĕнне ырлать, вара калаçу сисмесĕрех йĕр çине ӳкет. Çавна шута илсе, эпĕ те пирус кăлартăм та лавçа сĕнтĕм. Анчах вăл, пĕр пирус илес вырăнне, коробкипех ярса тытрĕ те çиелти ӳкерчĕке пăхма пуçларĕ.

— «Люкс»,—терĕ вăл тутине темле чалăштарарах, ун аллинче пĕр-пĕр йĕрĕнмелле япала пулнă пек.—Мĕне пĕлтерет-ха ку? Пĕр-пĕр хитре вырăн ӳкернĕ пулсан, çав вырăн ăстине кăтартса çырнă пулсан, тата тахчĕ... Калăпăр: «Казбек», «Сочи», «Северная Пальмира»...

Çапла каларĕ те, кăмăлсăр пулнă пек, пируса калле тавăрса пачĕ, хăй чикаркка чĕркесе тивертрĕ.

Вăл хăйне çапла тыткалани мана пушшех те тĕлĕнтерчĕ.

— Чăн калатăн,—терĕм эпĕ, унăн кăмăлне юрас шутпа,—пирĕн çĕршывра илемлĕ вырăнсем пит нумай, нумай кăна-и, пур çĕрте те хăйне евĕр илемлĕх! Çӳре, кур, савăн!

— Çӳренĕ, çитет. Халь ĕнтĕ точка!—сăмахне пăт татса каларĕ вăл. Унăн хăмăр куçĕсем енчен-енне сиккелеме тытăнчĕç, чылайх тулли сăн-пичĕ е пĕрҫкеленет, е кăмăллăн çиççе илет.

— Çапла çав, юлташ,—терĕ вăл малалла, пит тарăн шухăшлă хыпар пĕлтерме хатĕрленнĕ пек ассăн сывласа. — Çапла, сахал мар çӳрерĕм, таçта та çитсе куртăм, анчах чипер те йĕркеллĕ çын пек мар—айванла.

— Мĕнле тата вăл—айванла?

— Айванла çав! Ахальтен мар ĕнтĕ, яла таврăннă-таврăнманах хам çинчен такмак калама пуçларĕç. Юрă-çке, такмаклаччăр, пулнă-иртнĕ. Мĕн ман çиве унашкалах тĕлĕнсе пăхатăн? Итлеме кăмăлу пулсан, каласа пама пултаратăп.

...Çапла... Яла таврăнсан тепĕр кунне, каçалапа урама тухатăп та тăнн.. итлетĕп, çамрăксем юрă юрлаççĕ. Кам çинчен юрлаççĕ тетĕн? Ман çинчен!

Вĕç-вĕç Куçук, вĕç Куçук,
Тĕнче хĕрне çитиччен.
Тĕнче хĕрне çитсессĕн,
Пуçна усса канса лар...

Куçукĕ вăл—эпĕ. Хамăр ялта çапла чĕнеççĕ мана... Такмаклаччăрах ĕнтĕ, çамрăксен ĕçĕ çавă. Тепĕр тесен, ман пеккисене кăштах чĕпĕтсе илмесен те юрамасть. Чĕпĕтме кăна-и, чăпăркапах чашкăртмалла!

Мĕншĕн хăйне чăпăркапах чашкăртмалла пулнине — чухласа илейместĕп-ха, анчах ун сăмахне пӳлес килмест.

— Мĕнрен пуçланса кайрĕ тетĕн-и? Айван пуçпа янттине шыраса мар-и!.. Таврăнтăм вăрçăран, орден çакнă, медальсем чанкăртатаççĕ. Хамăр колхозри ĕçсене пуçсем питех мар Пĕр çул пурăнтăмăр, тепĕр çул... Виçĕ хутчен председательне улăштартăмăр, ĕç çав-çавах юсанса пымасть. Пĕри карланкине йĕпеткелет, тепри—кукăр аллипе туртать; хамăр та ни пуçа, ни хул-çурăма ытлашши сĕмĕрместпĕр. Паллах, пурте мар...

Пур пек выльăхне сутрăмăр, ăпăр-тапăрсене пухса çыхрăмăр. Ача-пăча пулман-ха, арăмпа иккĕнех. Ăçталла çул тытас? Тупрăм картта. Урала? Урала пулсан—Урала. Йывăр промышленность центрĕ! Унта пыратăп, кунта пыратăп: пур çĕрте те хапăл тусах йышăнаççĕ, пур çĕрте те ĕçлекенсем кирлĕ. Арăм та вырнаçрĕ, хваттер те пачĕç. Çапла çулталăка яхăн ĕçлерĕмĕр пулас. Анчах тем килĕшмерĕ, халь хам та калама пултараймастăп. Пĕррехинче ларатпăр Настаç арăмпа чей ĕçсе, алăра канфет. Хутне саркаласа пăхатăп—«Молдавия» тесе çырнă, ичĕм çырли ӳкернĕ. Çырлисем, çырлисем тата! Кăшт пуссанах сĕткен пĕрĕхес пек, тыт та хып, пăхнипех сăвар шывланать.

Ну, мĕнех, шутланă—тунă. Кăлтăр-тик, кăлтăр-тик тутараççĕ вагон кустăрмисем. Ту-ту-ут! кăшкăртать пăравусĕ. «Пожалте! Анма пултаратăр. Çитрĕмĕр. Молдави».

«Унта пурнăç лайăх пуль?» тесе ыйтасшăнччĕ кăна, анчах Куçук, ман шухăша пĕлнĕ пекех, куçран чăр-р пăхрĕ те васкасах калама пуçларĕ:

— Мĕн, чипер вырнаçса, пусăрăнса ĕçленĕ тетĕн-и? Ăçта унта?! Паллах, вăрçă хыççăнхи сурансем палăратчĕç, анчах эпĕ пынă колхоз куç умĕнчех ура çине тăрать. Ĕçкувĕ пуçне тырпулне шута илмесен те, виçшер, тăватшар литр врехлĕх виноград валеçеççĕ. Ман ăçта хурас ăна?! Унта пурăнакансен кашнин нӳхреп пур. Настаçпа иккĕн ĕçсе ярас-и?

...Чипер пурăннă çĕртех мана темле усал чир ерчĕ: Плюшкин хăраххи, ал айне мĕн лекет, çавна пуçтарса чикме пуçларăм. Куратăп пирус коробки—илетĕп: «Сочи» е «Казбек», е тата мĕн те пулин. Çапла майпа пуçларăм хейхи пирус коробкисемпе канфет хучĕсене пуçтарма. Савсем вара хăйне евĕр географи картти пулса тăчĕç. Асилме те намăс. Кăлтăр-тик, кăлтăр-тик ту-ут!—Кавказ! Кăлтăр-тик, ту-ут-ут!—Карели, Сталинград, Куйбышев, Сахалин!.. Пурна-киле манăн чир шаларах та шаларах каять. Сăткăнлансах хаçатсем вулама тытăнатăп, «çавăнта çав-çавă лайăх» — касса илетĕп те — кĕсъене. Кĕсъе тулать—чăматана! Каллех кăлтăр-тик, каллех ту-тут! Юрать-ха çĕршывĕ пысăк, пĕр-пĕр «Бенилюкс» мар... «Пĕр çĕрте—шорник, тепĕр çĕрте—дворник», тенĕ пек, темле ĕç те ал витĕр тухнă. Ывăл çуралчĕ. Арăм вăрçать. «Капла çӳресе йăлăхтарса çитерчĕ! Киле, атте патне таратăп!», тет. Мĕн калăн? Каять те каять! Пĕррехинче тата кăсăкрах пулса тухрĕ, вĕçех арăмпа сывпуллашаттăм. Çĕрле. Перронта халăх чăп тулли. Икĕ поезд. Асăрхаман та, пĕрне-пĕри çухатнă. Вăл пĕр поезд çине, эпĕ теприн çине. Ту-ту-ут! Эп ăна шыратăп, вăл мана шырать пулмалла. Хамăр малтан ларнă станцăна калле таврăнсан тин пĕр-пĕрине тĕл пултăмăр...

— Хамăр яла-и?—каллех ыйтрĕ вăл ман еннелле чăр-р пăхса. Эпĕ шарламарăм.

— Хамăр яла çырусем çыркаланă, анчах ял-йышсем çырнă çыру пире хуса çиттĕр-и? Ăçта унта?! Паллах, хамăр колхоз та ӳсех, кăватлансах пынă, анчах ун çинчен шухăшлама пуç пулман, вăхăчĕ те «çитмен» пулмалла!.. Мĕн калăн? Çапла çӳресе, ялтан кайнăранпа ултă облаçа, вуниçĕ хулана, çичĕ колхоза çитсе çапăнтăм вĕт. Кунта—«рентабельнă» мар, унта — «выгăдна» мар, лере—«доход» çук...

Юлашкинчен вара, çынсене курса, пурнăçа тухса, пачах урăхла шухăшлама пуçларăм... «Тĕнче—тетĕм мар, тессĕ те, çавах куçа çиет. «Çитет!—тетĕп хама-хам.—Точка!» Анчах хаçатсем вулама пăрахмастăп-ха. Сасартăк,—маншăн кăна ĕнтĕ вăл сасартăк,—партин Центральнай Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ! Çавăн хыççăн вара эпĕ хама-хам пушшех те намăслă туйма пуçларăм. Революци пуса иртнĕренпе вăтăр улттăмĕш çул пурăнатпăр мар-и?! Эпĕ ун чухне мисĕрĕ пулнă? Сĕтел айĕнче тăватă урав упаленнĕ. «Ме сана Совет влаçĕ, ӳс, вĕрен, ĕçле, пурăн!» Шухăшла-ха хăвах, пирĕн партипе правительство вамшăн ырминкани тăрăшать? Пирĕншĕнех мар-им?! Анчах эпир мĕн?—кăна эпĕ хам пирки ытларах калатăп,—эпир, мапашкалăисем, йывăç сулхăнне месерле тăсăлса выртнă та çăвара панулми ӳкессе кĕтсе выртатпăр: «Лайăхлатăр пирĕн пурнăçа... Туса парăр пире коммунизм! Халех, пĕр тăхтамасăрах!» Чышкă мукăшки памалла мар-и!

Ак ĕнтĕ яла çитрĕмĕр те. Санăн ăçталла каймаллаччĕ? Ах, Иленкассинех-и? Эппин çавă вăл... Анчах ман пеккисем пĕр эпĕ кăна тетĕн-и? Э-э, пур-ха! Пĕтмен. Анчах пĕтеççĕ. Пĕтеççех! Хам пеккипе тапре тĕл пулсан, хамах сунтарса илетĕп! Çитет! Точка!

Тен, хваттере ман пата кĕретĕн? Акă пирĕн кил. Юрать-ха, ун чухне ухмахланса сутман, ял-йышсем те тĕрĕс-тĕкелех усранă.

Пӳрчĕ кивĕрех, анчах пĕр чӳрече янахĕ çĕнĕ. Кивĕ хапхинче те, çапла пек, çĕнĕ хăмасем палăраççĕ. Пахча картисене сӳтнĕ те çĕнĕрен тытма пуçланă. Çаксене асăрхасанах çапла шухăшларăм: «Çук, Куçук текех «вĕçес» çук! Ку çын пĕтмен, вăл ăнланать. Яла таврăннăранпа эрне те çитмен, хăйăн хуçалăхĕнче çавăн чухлĕ улшăну туса ĕлкĕрнĕ. Точка!»

— Мĕн точка, тетĕн-и? Усăсăр çапкаланса çӳрес енĕпе—точка, анчах ытти енĕпе... Сан шутна мĕн, Куçук ялта çĕре килнĕ те лăпланнă тетĕн-и? Ялйыш умĕнче намăса ăçта хурас? Темиçе çул тĕнче касса çӳренăшĕн виçĕ хут, çичĕ хут ытларах ĕçлĕп, çапах та ялăма çĕртместĕпех! Эсĕ кур, Настаç чей лартĕ. Эпĕ халех, лаша тăварса килем-ха. Вара каллех калаçăпăр: малашнехи çинчен, ĕç çинчен!

Степан ПАВЛОВ.

Вулакансен ыйтăвĕсем çине панă ответсем

Кам вăл Маккарти, мĕн вăл маккартизм?

«Коммунизм ялавĕ» хаçата вулакан А. Лукин юлташ (Советски районĕ) «маккартизм» сăмах мĕне пĕлтернине ăнлантарса пама ыйтса çырать.

Реакци пăтранчăк хумĕ тĕрлĕ ĕрсĕре сӳле сĕклесе кăларни çинчен калакан тĕслĕхсене истори сахал мар пĕлет. Россинче çĕрсе пыракан самодержави хăй вăхăтĕнче тĕрлĕрен распутинсемпе илиодорсене тата вырубовсене çӳле сĕкленĕ; нимĕç фашизмĕ аскăнчăк ефрейтора, малтан пĕчĕк шпик пулнăскере, чи таса çын вырăнне хурса йышăнчĕ, Геббельспа Геринга тата çавсем йышши усал сыснасене государство ĕçне тума лартса пăхрĕ.

Ку вăл хыçа юлнă çулсенче пулнă. Хальхи вăхăтра США-ри тискер реакци Гитлерăн «мухтавлă» ĕçĕсем лăпланма памасçĕ, çак реакци хăйĕн пылчăклă ялавĕ çине Маккарти сенаторăн сăнне ӳкерсе хунă.

Çак ирсĕр этемĕн ячĕ Америка хаçачĕсен страницисем çинчен тухма та пĕлмест. Кам пулса тăрать-ха çак йĕксĕк?

Джозеф Маккарти 44 çулта. Хăйĕн политикăлла карьерине вăл сутăнчăкла ĕçсенчен пуçланă. Шавано текен пĕчĕк хулари (Висконсин штачĕ) колледжра юриспруденци вĕрентекен преподаватель пулнă чухне, ултавлă майсемпе усă курса, Маккарти демократилле партин вырăнти организацине хăйĕн кандидатурине округри прокурор пулма суйланма тăраттарнă. Анчах унăн ĕçĕ путланса ларнă. Ĕç тухманшăн вăл çапах та аптраса ӳкмен: демократсене улталаса, вăл шултра капиталăн тепĕр партийĕ енне—республиканецсем енне куçса ӳкнĕ. Республиканецсем ăна округри аппеляци сучĕн судьине лартма пулăшнă.

1942 çулта Маккарти тинĕс-çар пехотин корпусне каять. Çавăнта вара вăл халиччен курман «паттăрла ĕç» тăвать: хăй йышăннă тăрăх, вăл биржăри спекуляци пулăшнипе 1943 çулта кăна 40 пин доллар «ĕçлесе илнĕ». Çакă вăл — Америка хĕçпăшалĕн мухтавне çĕклес тĕлĕшпе Маккарти тунă пĕртен-пĕр «хастарлă» ĕç. Анчах хăйшĕн кăна çунакан çак этем 1946 çулта хăйĕн кандидатурине сенатор пулма тăратнă чухне суйлавçăсене сĕмсĕррĕн улталанă: хăйне вăрçăра нумай тӳссе иртнĕ çын вырăнне хурса, урана «10 кĕренке шрапнель» лекни çинчен каласа суйнă. Каярахпа çак ултав тăрă шыв çине тухнă: Маккарти вăрçăра нихçан та суранланса курман, вăл хытă ĕçсе ӳсĕрĕлсе ӳксе аманнă пулнă. Анчах та ултавлă ĕç ăннă, Маккарти сената лекнĕ.

Çĕнĕ сенатора тутлă качай шăрши хăш енчен килнине кăтартса пама та кирлĕ пулман. Куна вăл хăех лайăх пĕлсе тăнă. Маккарти сенатра хăйĕн ĕçне чи малтанах хваттер укçи тӳлемелли йĕркене государство енчен контроль тăвассине хирĕç кĕрешӳ çĕкленипе пуçланă. Сăмах майĕн каласан, халĕ ĕнтĕ ку контроле тума пăрахнă. Маккарти «çурт-йĕр строительстви мĕнле пынине тĕпчесе вĕренес тĕллевпе» хысна укçипе çĕршыв тăрăх çӳрекелет. Çав çӳревсем хыççăн вăл пĕр çыпăçусăр статья çырать, уншăн ăна «Ластрон корпорейшн» ятлă строительство компанийĕн президенчĕ пысăк гонорар тӳлет. Хаçатсем ун чухне çакна хытă палăртрĕç: Маккарти хăйĕн «литературăлла çак ĕçĕн» кашни сăмахĕшĕн 1 доллар та 43 цент таран гонорар укçи илнĕ. Пичетлемелли станок шухăшласа кăларнăранпа пĕр сăмах ăсти те, политикăлла пĕр деятель те—никам та çавăн чухлĕ пысăк укça илсе курман-ха. Чăнах та, каярахпа вара çакă паллă пулчĕ: çав юхăнса кайнă «Ластрон» фирма «хăйне хӳтĕлекен темĕнле çынсем» пулăшнипе государствăран нумай миллионлăх ссуда илме пултарнă.

Анчах ку вăл—сенатор илекен усламăн пĕчĕк пайĕ кăна-ха. Унсăр пуçне «политикăлла ĕçсем» тунипе 4 çул хушшинче вăл 60 пин доллар шалу илнĕ, çав хушăрах банкри хăйĕн счечĕ çине 172 пин доллар укçа хывма ĕлкĕрнĕ.

Висконсин штатĕнчен суйланă çак каскăн çыннăн тĕттĕмре тунă ĕçĕсем çинчен паллă сенаторсем те калаçу хускатнă. Сенатăн суйлавсем тĕлĕшпе ĕçлекен подкомиссийĕ те Маккарти сенатор пулма тивĕçлипе тивĕçлĕ марри çинчен тăракан ыйтăва çулталăк ытла тĕпчесе вĕреннĕ, ку енĕпе 400 ытла листаран тăракан доклад пичетлесе кăларнă. Çак докладра Маккартин ирсĕр ĕçĕсем çинчен калакан питĕ нумай тĕслĕхсем илсе кăтартнă. Сăмахран, 1950 çулхи сентябрьте Маккарти «коммунизма хирĕç кĕрешме» тесе 10 пин доллар укçа илнĕ. Шăп çав вăхăтрах соя пăрçипе спекуляци туса та вăл 17 пин доллар услам илнĕ. Кунта çакă палăрчĕ: сенатор ку спекуляципе США конгресĕнчи чанкайшилле агентсем пулăшнипе пула пысăк услам илме пултарнă.

Сенат подкомиссийĕн докладĕнче палăртнă тăрăх, Маккарти «Пепси-Кола компани» агентĕнчен вăл компани сахăр тăратнине правительство енчен контроль тăвассине хирĕç тăнăшăн 20 пин доллар илнĕ.

Подкомисси хăйĕн докладĕнче кун пек ытти вуншар ултавлă ĕçсем çинчен çырса хунă, анчах хăй енчен нимĕнле сĕнӳсем те паман. Сенаторăн ултавлă ĕçĕсем çаплипех юлнă.

Çавăн пек ĕнтĕ Джозеф Маккарти... Вăл хăй тĕллĕн, пĕр-пĕччен кăна пулнă пулсан, США-ра «маккартизм» текен паллă явлени пулман пулсан, Маккарти çинчен асăнма та кирлех марччĕ. Каскăн сенатор çинчен çакна кăна каламаллаччĕ: вăл пĕрремĕш ултавçă та мар, юлашкийĕ те мар, Америкăри государство аппарачĕ ун тан та аскăнтарах вăрăсем курнă. Ахальтен мар ĕнтĕ, Марк Твен хăй виличчен çапла çырса хăварнă: «Тӳрĕ кăмăллă пулнине манăн çĕршыв правительстви питĕ кураймасть, чарусăр ултавçă пулнине вара питĕ юратать. Эпĕ государство службинче пĕр-икĕ çуллăха юлас пулсан, манран питĕ ăста кĕсъе вăрри пулмалла, тесе шутлатăп». Кăна çур ĕмĕр каярах çырнă. Унтанпа США-н государство аппарачĕ ултавлă ĕçсем тăвас енĕпе малалла питĕ пысăк утăм турĕ ĕнтĕ...

* * *

Мĕн-ха вăл маккартизм, унăн социальнăй тымарĕсем мĕнрен тытăнса тăраççĕ?

Маккартизм вăл—фашизм ӳссĕнах иртĕхни, Америка империализмĕ çуратса ӳстернĕ, тĕнчере пуç пулса тăма ĕмĕтленекен монополистсемшĕн тăрăшакан фашизм; сивĕ вăрçăн тата урса кайсах хĕçпăшалланассин символĕ; ирĕклĕхпе демократие хирĕç тăракан тĕттĕмлĕх символĕ. Маккартизм ултав тата «пысăк суя» меслечĕпе ĕçлет. Пирĕн ĕмĕрти çак намăсла явление США-ри демократилле ушкăнсем çакăн пек хак параççĕ те ĕнтĕ. «Политикл афферс» ятлă прогрессивлă журнал маккартистсене «фашистсен отрячĕ» вырăнне хурать, халăхсем тĕрĕслĕхшĕн тăнине пĕтерсе лартмалли, фашизма çул уçса памалли, çĕршыва фашизм çулĕпе илсе каймалли хатĕр вырăнне шутлать. «Татăклăн каласан,—тесе çырать журнал,—маккартизм эйзенхауэрла йĕркене тата сылтăмарах пăрасшăн, унтан фашистла йĕрке туса хурасшăн». Кунпа пĕрлех «Политикл афферс» çакна палăртать: маккартизмăн политикăлла линийĕ республиканецсен партийĕн правительстви тытса пыракан политикăран, тĕпрен илсен, нимĕнпе те уйрăлса тăмасть.

Маккартистсен «пысăк суя» меслечĕ ĕненмеллех мар, вăл Геббельсăн хăй вăхăтĕнчи суя пропагандинчен те ансатрах. «Америкăна хĕрлĕ хăрушлăх хăратать, пур çĕрте те хĕрлĕ хăрушлăх!» — ултавлă сенаторпа унăн тусĕсем çакăн пек кăшкăраççĕ ĕнтĕ.

Виçĕ çул каярах Маккарти США-н госдепартаменчĕ Мускав агенчĕсем пулса тăракан коммунистсенчен тăрать тесе, тĕлĕнтермĕш сăмах тухса каларĕ. Вăл çапла каланине пĕтĕм реакциллĕ хаçатсем ырласа çырчĕç. Малтан вăл госдепартаментра «пуç пулса тăракан» коммунистсен шучĕ 205 çын тесе пĕлтерчĕ, унтан ку хисепе кăштах чакарчĕ—вĕсен шучĕ унта 81 çын тесе, тата тăхтарахпа 57 çын тесе ĕнентерме пуçларĕ. Ку вăл суя пулни пуриншĕн те паллă. Анчах Маккартипе унти хаçатсем хăйсен ĕçне тума ĕлкĕрчĕç: вĕсем пĕтĕм çĕршыва пăтраштарса ячĕç, обществăн тĕрлĕ каяшĕсене—хăйсен хăрăк сассисемпе «хĕрлисен хăрушлăхĕ» çинчен кăшкăракансене темиçе пиншер çăвара хускатрĕç.

Кун пек тĕслĕхсене вуншарăн кăтартса пама пулать. Вĕсем пурте «идеологилле хатĕрленӳ» тата тĕтĕм чаршавĕ пулса тăраççĕ. Ку чаршав хыçĕнче тулашри политика енĕпе тăвакан вăрттăн ĕçсем, çĕршыври полицин фашистла ĕçĕсем тăраççĕ. Американецсен шухăшĕсене кам контроль туса тăрать-ха? Çав Маккартинех, вăл ертсе пыракан сенат комиссийĕ.

Маккарти, элеклесе, Трумэн тата государство секретарĕ пулнă Дин Ачесон та «хĕрлисем» пулса тăраççĕ тесе пĕлтернĕ. Трумэн, тĕнчери халăхсем тата хăйсен агрессилле союзникĕсем хĕснипе, Корейăри главнокомандующие Маккартура вырăнтан кăларсан, Маккарти президента «йытă ывăлĕ» тесе ят панă, çав каппайчăк генерала ĕçрен хăтармалли приказ çине алă пуснă чухне «Трумэн ӳсĕр пулнă», тесе ĕнентернĕ.

Кунта США-ри паллă ушкăнсем мĕнле тактика тытнине ăнлантарса парас пулать. Маккартипе маккартистсем, чăннипе илсен, Трумэна—сивĕ вăрçă пуçараканă, Корейăра вăрă-хурахла вăрçă пуçарса янăскере тата яланах монополисен интересĕсемшĕн тăрăшнăскере—вăл «хĕрлисем» енче тăрать тесе нихçан та шутламан, ун пек шухăш вĕсен пачах пулман. Маккартистсене президент çине хытă тапăнма лару-тăру хушнă.

Маккартизм США-ри империалистла монополисен социальнăй наказĕсене пурнăçласа пынă, пурнăçа кĕртсе пырать те: вăл «хĕрлĕ хăрушлăх» çинчен хăрăк сасăпа кăшкăрса, çĕршывра вăрçа хатĕрленме кирли çинчен тискер шухăш сарать, государствăна нумай тĕрлĕ парăмсем тӳленипе юхăнакан «вăтам американеца» сивĕ вăрçăн политикине ĕнентерме пăхать, çав «вăтам американецăн» юлашки юлнă демократилле прависем çине тапăнакан политикăна тӳрре кăларма пăхать.

Америка империализмĕ халĕ агрессор кăна пулса тăмасть, ăçта май пур—çавăнта пур çĕрте те вăл ирĕклĕхе пĕтерсе лартма хăтланакан тата фашистла йĕрке туса хума тăрăшакан тĕнчери жандарм пулса тăнă. Çак политикăн идеологĕ маккартизм пулса тăрать. Маккарти сенаторпа ун майлисем Китай халăхне, халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç вăрçассишĕн тăраççĕ, Чан Кай-шипе Франкона, чĕрĕ юлнă гитлеровецсене, пулăшма кирли çинчен çуйхăшаççĕ.

Суеçĕ сенатор ытлашши ухмахланса сӳпĕлтетни ăна хӳтĕлекен çынсене те кăштах йĕклентерет. Çавăнпа та вĕсем Маккартирен, вăл «хĕрлĕ хăрушлăх» çинчен сӳпĕлтетнинчен, шухăшсене тĕрĕслемелли унăн фашистла меслетĕнчен кулса та пăхаççĕ. Анчах ун пек кулнине чăн ĕç вырăнне хума çук, çапла туни улпут хăйĕншĕн тăрăшакан тарçине çурăмран лăпканине кăна пĕлтерет. Çапла, сăмахран, США-н хальхи президенчĕ Эйзенхауэр пĕлтĕр Денверта суйлав умĕнхи митингра тухса каланă чухне Маккарти меслечĕсем «Америкăна хирĕçле» меслетсем пулса тăраççĕ, терĕ. Çапах та Эйзенхауэр çавăнтах Висконсинри çак демагога, вăл «республиканецсен партине хӳтĕлеме кирлĕ пирки», сената тепĕр хут суйлама хушрĕ, вара çавăн пек тунă та.

Маккартизм Америка реакцине çĕршывра фашистла йĕрке туса хума кирлĕ хĕçпăшал пулса тăрать. Тафт-Хартлин рабочисене хирĕçле законĕ, «шухăшсене контроль туни», США-ри компарти членĕсемпе прогрессивлă этемсене, çав хушăрах миршĕн пыракан юхăма хутшăнакансене те хаяррăн йĕрлени, библиотекăсене тасатни,—çаксем пурте çĕршывра фашистла йĕрке тăвас тĕлĕшпе пыракан ĕçсен пĕр пайĕ кăна пулса тăраççĕ. Чылай хуласенче, сăмахран, Сан-Антониори муниципалитетра, Маккарти хыççăн каякансем библиотекăри кĕнекесене... клеме çапма йышăннă. Маккартин ăссăр шухăшĕсемпе кăшт та пулин килĕшсе тăман писательсен кĕнекисем тĕлĕшпе те çавăн пек тискер ĕçсем тăваççĕ.

Анчах Америка халăхĕ хушшинче маккартизма çапса салатас шухăш ӳссе пырать. Маккартизм фашистла чи тискер йĕрке тума хăтланнине, пĕтĕм наципе хăратса тăнине Америка çыннисем ăнланса пыраççĕ. Çавăнпа та халĕ маккартизма хирĕç коммунистсем кăна мар, мирпе демократи тата культура камшăн хаклă, çавсем пурте кĕрешеççĕ. США-ри политикăпа тĕн тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ шухăшлă, тĕрлĕ социальнăй сийри çынсем маккартизма хирĕç хăюллăн тăраççĕ.

И. АРТЕМОВ.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи хутăш комиссин иккĕмĕш ларăвĕ

БЕРЛИН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Берлинра Совет Союзĕпе Германи хушшинчи хутăш комиссин иккĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Комисси Совет Союзĕ аллинче пулнă 38 предприятие 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тӳлевсĕрех Демократиллĕ Германи аллине парас тĕлĕшпе ĕçлет.

Ларура предприятисене парас ĕçе мĕнле туса иртересси çыхăннă ыйтусене, çавăн пекех предприятисене 1954 çулта ĕçлеттерме хатĕрлес тĕлĕшпе туса иртермелли ĕçсене пăхса тухнă.

Тегеранри лару-тăру

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Эттелаат» хаçат Тегеранăн çар губернаторĕ пухусемпе демонстрацисем иртерме чарни çинчен панă распоряжение пичетлет. Губернатор пĕлтернĕ тăрăх, влаçсене «демонстрантсене пур майсемпе те хăваласа салатма» кăтарту панă.

Çак хаçатах çапла çырать: ĕнер Тегеранри университет патĕнче, пасар районĕнче, çавăн пекех юстици министерстви умĕнче тата ытти урамсенче манифестацисемпе вĕçке вăхăта пыракан митингсем пулса иртнĕ. Пасара кăнтăрлаччен хупнă пулнă, университетри студентсем нумайăшĕ занятисене пыман.

Хаçат çырнă тăрăх, Тегеран урамĕсем тăрăх «Сумка» партийĕн, «Мордадăн 28-мĕшĕнчи (августăн 19-мĕшĕ) наци восстанийĕн обществин» тата «Ария» партийĕн членĕсем машинăсем çинче ларса çӳренĕ, вĕсем демонстрантсене хăваласа салатнă.

Ĕнер 90 çынна арестленĕ. Университет çывăхĕнче пĕр çынна йывăр амантнă, вăл часах больницăра вилнĕ.

Ĕнер тухнă «Кейхан» хаçат хулара 140 çынна арестлени çинчен пĕлтерет.

Австрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ

ВЕНА, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Австрире Австрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ иртет. Грац хулинче пуху пулса иртнĕ. Унта Штири провинци правительствин представителĕсем тата нумай предприятисен делегачĕсем пулнă. Австрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ ячĕпе Леобен хулинче те митинг иртернĕ. Инсбрук хулинче иртнĕ пухăва хулари çĕршер çын хутшăннă. Пуху хыççăн Атăлпа Дон хушшинчи Ленин ячĕпе тăракан канал çинчен ӳкернĕ кинофильма кăтартнă.

Каринтире Австрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ Клагенфуртпа Филлахра пухусем иртернипе уçăлнă.

Венăри «Урания» кинотеатрта Совет Союзĕнче ӳкернĕ «Во льдах Арктики» кинофильма кăтартаççĕ, ăна курма халăх нумай çӳрет.

„Европа çарне“ тунине хирĕç

Францири общественноçăн протесчĕ

ПАРИЖ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Парижри «Мютюалите» залĕнче митинг пулса иртнĕ, унта хутшăннисем «Европа çарне» тунине хирĕç протестленĕ. Митинга Францин Нацин никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен комитечĕ пуханă. Митингра тĕрлĕрен политикăлла партисен представителĕсем—Бийот генерал («социальнăй ĕçсен республикăри союзĕ»), Лапи (социалист), Денэ («независимăй республиканец»), Даладье (радикал), Барфес («социальнăй ĕçсен республикăри союзĕ»), Дени (католикла парти), Палевский («социальнăй ĕçсен республикăри союзĕ») тата ыттисем те тухса каланă.

Пĕрремĕш оратор, Бийот генерал, çапла пĕлтернĕ: «Европа çарĕ» çинчен Парижра тунă договора çирĕплетес пулсан, çав договор Франци çарне «Францие хирĕçле ĕçшĕн, шӳт тăваканăн костюмне тăхăнса вилнĕ çын пек, намăс вилĕм патне илсе çитерет». Вăл çапла каланă: «Европа çарĕ» хăйпе пĕрле хирĕçӳсен пуçламăшне илсе килет, çав çар майлă тăракан çынсем Францире «хăйсен çĕршывĕ мĕн тума пултарассине шанман, ответлăхран хăракан çынсем пулса тăраççĕ».

Наци пухăвĕн депутачĕ Денэ çакна паллă тунă: «Европăри пĕрлешӳ» Францин экономика тĕлĕшĕнчен никама пăхăнса тăманлăхне хăратать. Нимĕç çарĕсем каллех Парижа килнипе Парижра пурăнакансем нихçан та килĕшмĕç, тенĕ Денэ.

Митингра пулнисем Франци Министрсен Совечĕн председателĕ пулнă Эдуард Даладье каланине пысăк тимлĕхпе итленĕ. Вăл çапла каланă: Корейăра пысăк поражени тӳснĕ хыççăн американецсем Хĕвеланăç Германие хĕçпăшаллантарас тесе уйрăмах çине тăрса требовани лартма пуçларĕç. Германи милитаризмĕ тепĕр хут çĕкленни Францишĕн питех те пысăк хăрушлăх пулса тăнине кăтартса парса, Даладье çапла каланă: гитлерла çара çĕнтерессишĕн миллионшар вырăс çыннисем вилнине пĕр французăн та манма юрамасть. Хальхи вăхăтри союзсене тĕп тăвиччен пирĕн çакăн çинчен аса илмелле: гитлерла çара çапса аркатнă çĕрте вырăс çарĕ тĕп вырăн йышăнчĕ.

Республика Совечĕн членĕ Анри Торрес (деголлевецсен партийĕ) çапла каланă: вăл, Эдуард Даладье пекех, хуть те хăш партпре тăракан политикăлла деятельпе пĕрле «Европа çарне» татăклăн хирĕç тăма хатĕр.

Митингра тухса каланă мĕнпур ораторсем влаçра тăракан ушкăнсем Парижра тунă договора çирĕплетме хăтланнине хирĕç татăклăн протестленĕ.

Митингра Наци пухăвĕн председателĕ Эдуард Эррио янă çырăва вуласа панă. Вăл çак митинга пухнине ырланă, Парижра тунă договора хирĕç тăнине палăртнă.

Америка çар çыннисен суя докладне тăрă шыв çине кăлараççĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Эрнере пĕрре тухса тăракан «А. Ф. Стоунс ньюс уикли» журналăн юлашки номерĕнче Пентагонăн (США-н çар ведомстви) «тискер ĕçсем» çинчен нумаях пулмасть тунă докладне тăрă шыв çине кăларас тĕллевпе нумай çырнă. Çав «тискер ĕçсене» Корейăра Çурçĕр Корея çарĕсемпе Китай добровольцĕсем тунă пулать.

Докладра чăнлăхпа килĕшсе тăман вырăнсене илсе кăтартса, журнал Пентагон «тискер ĕçсем» çинчен çырнă хăйĕн «статистикине» виçĕ пая уйăрнине паллă тăвать: «маларах пĕлтернĕ тискер ĕçсем», «пулма пултарнă тискер ĕçсем» тата «тискер ĕçсем тунине пула», «çынсем вилни тата асап курни паллă пулни».

Çар министерствин докладĕнче çакăн çинчен çирĕплетсе калаççĕ: «тискер ĕçсем туни çинчен» пĕлтерни 57 пин хутчен пулнă, «тискер ĕçсем» 21.815 хутчен «пулма пултарнă», 10.565 хутчен «тискер ĕçсем» тунине пула «çынсем вилни тата асап курни паллă», тесе аса илтерет журнал.

Çакăн пек чее статистика çинчен çырса, «А. Ф. Стоунс ньюс уикли» журнал çапла калать: «Ку вăл—халиччен пулман классификаци системи. Вăл çакна пĕлтерет: тискер ĕçсем 57 пин хутчен пулни çинчен пĕлтернĕ пулсан, çар министерствин çар преступленийĕсене тĕпчесе пĕлес енĕпе ĕçлекен пайĕ çав хисепрен çуррине тĕрĕс мар тесе шутлать. Система çакна пĕлтерет: тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлес енĕпе ĕçлекен çынсем хăйсем те, ку пĕлтернисене пăхса тухнă хыççăн, çав тискер ĕçсем хăçан та пулин пулнине ĕненмеççĕ».

Журнал малалла çапла çырать: «Тискер ĕçсем çинчен пĕлтернин тĕп çăлкуçĕсене ăçтан тупнă-ха? Докладра калакан тăрăх, çав çăлкуçсен «тĕп пайĕ» тăшманăн пирĕн алăра пулнă тыткăнри çар çыннисем каласа пани çинче никĕсленсе тăрать. Тыткăнри çар çыннине вĕсем Пĕрлешнĕ Нацисен çарĕсене хирĕç преступленисем тунă тесе калаттарма мĕнле майпа пулать-ха? Уншăн ăна пысăк наказани пама е вĕлерме пултараççĕ-çке-ха. Паллă ĕнтĕ, çавăн пек каланисем ирĕклĕ майпа пулман... Çар çыннисене, начар пăхса е асаплантарса миçе хутчен çавăн пек йышăнтарнине пĕлес килет».

Докладри тĕрлĕ вырăнсене тăрă шыв çине кăларса,—журнал вĕсене «туппине пĕлме хĕн япаласем» тет,—«А. Ф. Стоунс ньюс уикли» журнал çакна кăтартса парать: «Доклад хăй чăннипех тискер ĕç пулса тăрать... Ку докладăн тĕллевĕ общественность шухăш-кăмăлне пăтраштарассинчен урăхла пулма пултараймасть. Ку доклад ирсĕр суя ĕç пулса тăрать. Вăл çак вăрçă вăхăтĕнче яланах американецсен ăс-тăнне тĕрĕслеме тата пăтраштарма тăрăшнă çар çыннисен ирсĕр ĕçĕсемпе пĕр шухăшлă».

Çар министрĕ Стивенс «тискер ĕçсем» çинчен тунă доклад çумне хушса çырнă çырура çар валли укçа-тенкĕ уйăрса пама требовани лартнине кăтартса парса, журнал юлашкинчен çапла асăнса илет: «Çапла майпа тискер ĕçсем çинчен шухăшласа кăларнă юмах çар бюджетне ӳстересси çинчен требовани лартнипе вĕçленнĕ».

АДН агентстви пĕлтерни

БЕРЛИН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çапла пĕлтерет:

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви, Хĕвеланăç Германин финанспа экономикăлла обязательствисене çăмăллатма ыйтса, США, Великобритани тата Франци правительствисем патне çыру янă май, Америкăри «Ди Нейе Цейтунг» хаçат ноябрĕн 10-мĕшĕнчи умстатьяра тĕрлĕ майпа пăркаланса çырнă. Çапла пăркаланса çырнин тĕллевĕ Америкăн оккупаци влаçĕсем Хĕвеланăç Германири бюджетран укçа-тенкĕ илсе тăрассине чакарма килĕшменнине тӳрре кăларасси пулать.

Хаçат çапла суйса калать: Совет çарĕсем Германире тăнă пирки тухакан Демократиллĕ Германи Республикин расхочĕсене совет влаçĕсем 1938 çулхи тĕнчери рынок хакĕсем тăрăх шутлаççĕ, çавна пула расходсем кăçалхи августăн 23-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Германи хушшинче тунă протоколта кăтартнă пек 1,6 миллиард марка мар, сахалтан та 3,2 миллиард маркăна çитеççĕ. Çавна май хаçат ĕçе çакăн пек кăтартса пама хăтланать: оккупацие пула кашни çын пуçне тивекен расходсем Демократиллĕ Германи Республикинче Хĕвеланăç Германири пекех пысăк имĕш.

АДН агентстви çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: «Ди Нейе Цейтунг» хаçат çапла çирĕплетсе калани ултавлă ĕç туни пулса тăрать, вăл Хĕвеланăç Германири общественноçа пăтраштарас тĕллев лартать.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви хăйĕн бюджетĕнчен, чăннипе илсен, оккупаци тĕллевĕсем валли 1,6 миллиард марка уйăрать. Совет çарĕсем таварсем сутăн илессине тата ытти суту-илӳ ĕçĕсене çĕршыври хаксемпе килĕштерсе туса пыраççĕ. Çак хаксем Демократиллĕ Германи Республикинче тавар илекенсемпе тавар тăратакансемшĕн пĕр пек пулса тăраççĕ.

Çапла майпа Демократиллĕ Германи Республикин оккупаци расхочĕсем Демократиллĕ Германи Республикин государство бюджечĕн тупăшĕн 5 проценчĕ чухлĕ пулаççĕ. Çав вăхăтрах Хĕвеланăç Германин оккупаци расхочĕсем, тулли мар сведенисем тăрăх илес пулсан та, 9,6 миллиард марка пулаççĕ. Ку вăл Хĕвеланăç Германи бюджетĕнчи тупăшсен 34,5 проценчĕ чухлĕ пулать.

Америкăн оккупаци влаçĕсем нимĕç халăхĕн питех те пысăк ыйтăвĕ çине ответ парассинчен пăрăнма хăтланаççĕ. Анчах та Хĕвеланăç Германин вăрçă пирки пулса тухнă ĕçсемпе çыхăнса тăракан финанспа экономика обязательствисене чакарма килĕшнипе килĕшменни çине Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ответ памаллах пулать.

США правительствипе Америкăн Германири оккупаци влаçĕсен нимĕç халăхĕн тĕрĕслĕхлĕ требованийĕ çине ответ памалла. Вăл требованисене Демократиллĕ Германи Республикин правительстви ноябрĕн 7-мĕшĕнче янă çырăвĕнче кăтартса панă.

Демократиллĕ Корея Халăх республикине паракан пулăшу

ВАРШАВА, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Польшăра Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительство делегацийĕ пулнă. Ăна суту-илӳ министрĕ Ли Чжу Ен ертсе пынă.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, калаçусем иртнине пула, Польша Демократиллĕ Корея Халăх Республикин халăх хуçалăхне юсас ĕçре пулăшу парасси çинчен тунă килĕшӳ çине алă пуснă.

Килĕшӳре çакна палăртнă: Польша Демократиллĕ Корея Халăх Республикине 1953—1954 çулсенче станоксем, прокат изделийĕсем, чугун çул составĕсем тата ытти материалсемпе таварсем парса тăмалла. Çаксемшĕн Корейăн нимĕн те тӳлемелле мар. Килĕшӳре çавăн пекех Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи промышленность предприятийĕсемпе шахтăсем тăвас тата юсас, хуласен проектне тăвас тата ишĕлнĕ хуласене юсас ĕç валли пĕр тӳлевсĕрех материальнăй тата техникăлла пулăшу пама палăртнă.

Моссовет ячĕпе тăракан театрăн гастролĕсем вĕçленнĕ

СОФИЯ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Мускаври Моссовет ячĕпе тăракан театрăн Болгари гастролĕсем вĕçленнĕ. Театр Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăхпа совет культурин уйăхлăхĕ ячĕпе Болгарие пынă пулнă. Болгарири ĕçсыннисем театр коллективне ăшшăн кĕтсе илнĕ. Мĕнпур спектакльсем пысăк ăнăçлăхпа иртнĕ. Моссовет ячĕпе тăракан театр коллективĕ София хулинче тата çĕршыври ытти пысăк хуласемпе промышленность центрĕсенче спектакльсем кăтартнă, концертсем панă. Болгарире пулнă вăхăтра театр 48 спектакль тата 70 концерт панă. Вĕсене 100 пин çын ытла пырса курнă.

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Наука, искусствăпа культура ĕçĕсен комитечĕ Моссовет ячĕпе тăракан театр коллективĕн ячĕпе йышăну туса ирттернĕ.

Йышăнура Министрсен Совечĕн председателĕ Вылко Червенков, Болгарири Коммунистсен партийĕн Политбюро членĕсемпе Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕсем, министрсем, Халăх пухăвĕн президиумĕн членĕсем, Совет Союзĕн Болгарири посолĕ М. Ф. Бодров, наука, литературăпа искусство деятелĕсем, Болгари столицинчи общественноçăн представителĕсем пулнă.

Мускаври театр коллективĕ ячĕпе Болгари артисчĕсем пысăк концерт панă.

ПĔЛТЕРНИ

Ноябрĕн 17-мĕшĕнче, 20 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче политикăлла экономие харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Политикăлла экономи предмечĕ».

Лектор—П. Л. Лебедев юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

* * *

Шупашкарта 1953 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче 15 сехетре, КПСС обкомĕ çумĕнчи парткурссен лекци залĕнче. Чăвашоблпрофсоветăн IX-мĕш пленумĕ уçăлать.

Пленум кун йĕркинче КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсене сӳтсе явас ыйту тăрать.

Докладчик—Чăвашоблпрофсовет председателĕ М. Романова юлташ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 15-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Беспокойная должность»; ноябрĕн 16-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Вей, ветерок», ЧАСАХ!—чăвашла спектакль «Юратнă хĕр». вырăсла спектакль «Не называя фамилий».

Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

ÇАМРАКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине вырăсла спектакль «Цитадель славы».

Кăнтăрлахи спектакль 14 сехетре, каçхине—19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 15-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Мой маленький друг».

Сеанссем пуçланаççĕ: 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м. тата 20 с. 15 м.

КПСС Шупашкар хула комитечĕ 1919 çулхи октябрь уйăхĕнченпе КПСС членĕ пулнă

ИЛЬИН ИЛЬЯ ИЛЬИЧ

нумай вăхăт йывăр чирлесе выртнă хыççăн çак çулхи ноябрĕн 13-мĕшĕнче вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

Шупашкарти 6-мĕш номерлĕ вăтам шкулти КПСС пуçламăш организацийĕ, администраци тата местком Зоя Григорьевна Ильина учительницăн упăшки

ИЛЬИН ИЛЬЯ ИЛЬИЧ

чылай вăхăт чирлесе выртнă хыççăн ноябрĕн 13-мĕшĕнче вилни çинчен питĕ хурланса пĕлтереççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09637 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2633. Тираж 20.000 экз.